1937
НОЙАБĔР
17
ЙУНКУН
263 (4775)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Йалта боłшевикла агитацине пропагандăна анлăрах сарар

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавне атĕрленесси колхозсенче доходсене ва-çнипе пĕр тĕлте килет. Кăçалхи йал-ÿçалăх çулĕн итогĕсем питĕ ырă. Вĕсем овет влаçĕ хресченсене çав тери нумай апине пĕтĕм тĕнчене тата тепĕр хут ăтартса параççĕ. Кăçалхи çул тĕштырă-ем тата техникăла куłтурăсем вăйлă улни колхозсемпе колхозниксене пысăк оходсем пачĕ. Пирĕн çĕршывăн пур ĕтĕсĕсенчен те ĕçкунĕ хаклă тăни çиç-ĕн хыпарсем килеççĕ. Колхоз стройĕ ну-ай маларах тăнине кашни хресченпе ресчен хĕрарăмĕ хăйĕн опытĕнчен кур-ĕненет,—колхоз стройĕ вăл колхоз ĕмĕн кĕрешекене кашнине пуйан та уłтурлă пурнăç парать.

Кăçалхи продукцине малтанласа шут-аса тухнă тăрăх, ССР Сойузĕнчи çĕр ĕ халех ĕнтĕ революци пуличченхи ăхăтринчен икĕ хут ытларах продукци арать. Кăçалхи çул çĕр ĕçпе выłăх-чĕр-ĕх ĕрчетнин продукцийĕ 1926—27 çул-ичи хаксемпе шутласан 23 мĕлйард икĕ тăрать, 1913 çулта çав продукци, ăннă çулсенчи хаксемпех шутласан, 2,6 мĕлйард тенкĕ тăнă. Коллективиза-и çулĕсенче пирĕн çĕр ĕçĕ улăпла утăм-малала йарса пуснипе пула колхозсен аварлă продукцийĕ калама çук ÿсрĕ та-ĕçкунĕ хаклă тăракан пулчĕ. Кăçал-и çул пĕтĕм районĕпе вăтамран шутла-н ĕçкунĕ пуçне тĕштырă 7—10 кило-рам паракан колхозсем сахал мар.

Молдаван республикĕнчи Рыбницки ра-онĕнчи колхозсем 30 пин гектарлă пит ысăк талкишлĕ çĕр çинчен гектартан 00 пăт тырă туса илнĕ. Ку районра олхозниксене ĕçкунĕ пуçне вăтамран 5 килограм тыштырă параççĕ, ытти одуктăсем тата укçа ку шута кĕмест-. Çав районта йунашарти Каменски айонĕнче ĕçкунĕ пуçне вăтамран 6 ки-ограм тырă тата 1 тенкĕ те 50 пус ук-н параççĕ.

Кун пек примерсене пит нумай илсе ăтартма пулать. Уйрăм колхозсене илсен сен дохочĕсем тата пит тĕлĕнмеле ны-к. Нумай пулмасть „12 годовщина Ок-ября" йалхуçалăх ертелĕнчи Ростов блаçĕнчи Йегорлыкски станцинчи казак олхозниксем Сталин йулташ патне сы-йачĕç. Çав çырура вĕсем çапла çыр-ç:

„Пирĕн ĕçкунĕ—пуйан ĕçкунĕ пулса ăчĕ. 1935 ç. епĕр ĕçкунĕ пуçне 1,8 кило-рам тырă илнĕччĕ, а кăçалхи çул, госу-арства умĕнчи пур обйазателствăсене вăхăтра парса татнă хыççăн, вăрлăх, ураж тата страховой фончĕсене хывнă ыççăн, пирĕн ĕçкунĕсем тăрăх валеçме, евелçаварнăшне шутламасан та, ĕçкунĕ уçне 32 килограм тырă йулчĕ... Колхоз-тулăх пурнăç пирĕн çуллен çулах ÿс-пырать. Казакăн пурнăçĕ пуйан та те-йĕлĕ пулса тăчĕ".

Парти тата Совет влаçĕ чĕннипе кол-озсене кĕнĕ мĕлйуншар чухăнсемпе вă-амсем тулăх пурнăçпа пурăнакан, ыран кун çине хăйулă пăхакан çынсем, оциалисăмла обшчĕствăн ăнлануллă роителсен тулли пурнăçĕпе пурăнакан ынсем пулса тăчĕç.

Пирĕн çĕршывра чухăнлăхпа çуклăха ĕрлĕхех пĕтерсе хунă. Патша Росси-ĕнче выçă пурăннă чухăнсем çирĕм мĕл-ун çын ытла пулнă, халĕ ĕнтĕ пирĕн алсенче ун пек чухăнсем çук. Çук-ăха пĕтернĕ. Пирĕн çĕршывра лаша-ăр, инвентарсăр, çĕр акмасăр пурăна-н хуçалăхсем çук. Колхоз стройĕ хрес-ене çутă та хаваслă пурнăç пачĕ. Ку ăл—Ленин—Сталин партийĕшĕн, Со-ет влаçĕшĕн, çĕршыв ССР Сойузĕн Аслă оветне депутата суйлама кандидата па-ăртнă малта цыракан çынсемшĕн чи ла-ăх агитацилекенни пулса тăрать.

Ново-Сибирск облаçĕнчи Ленински ра-онĕнчи „Девятое января" колхозри кол-озниксем нумай пулмасть хăйсен дохо-ĕсене шутласа тухнă, ĕлĕкхи пурнăçа алłхи пурнăçпа танлаштарса пăхнă.

—Пирĕн ĕмĕрте кун чухлĕ нумай ты-ă пирĕн нихçан та пулман,—тенĕ кол-озниксем.—Григори Семайкин, ĕлĕк ни-ăçан та нушаран тухса курман çын 00 ĕçкунĕ тунă та 668 пăт тырă илет. ĕлĕк чухăн çын пулнă Йегор Павлович ебиков хăйĕн ывăлĕпе 750 пăт тырă çлесе илчĕ.

Колхозлă йал пуйан пурнăç патне ан-ă çулпа пырать.

— Акă мĕншĕн пирĕн пит-куçсем çав ери хаваслă,—тесе çыраççĕ Йегорлык-ски станцинчи колхозниксем.—Акă мĕн-шĕн епĕр боłшевиксен партине, хамă-рăн тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн тата вĕçĕмсĕр йурататпăр, акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн станицăсемпе хутăрсенче хаваслă кулăпа йанравлă йурă сасси йалапах ил-тĕнсе тăрать.

Халĕ йалта суйлав кампанийĕ халич-чен нихăçан пулман çĕкленÿпе иртсе пырать. Ку вăл суйлав умĕнхи пухусенче, округсенчи совешчанисенче курăнчĕ. Хуçалăх çулĕн резулłтачĕсем совет хресче-нĕсене калама çук ырă малашлăх ÿçса пачĕç. Çавăнпа колхоз массисен полити-кăла активлăхĕ улăпла хумпа ÿçсе пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем çĕ-нĕ те телейлĕ пурнăçа вĕсем колхоз стройне пула тупнине пит лайăх ăнла-наççĕ. Йалти халăхăн шухăшĕсемпе кă-мăлĕсем пайан Сталин йулташ патне туртăнаççĕ. Вăл, Сталин йулташ, нумай мĕлйунлă хресченсене тĕрĕс çул кăтарт-са пырса, пайанхи хаваслă куна илсе çитерчĕ. Унăн йатне, социалисăм çĕнте-рĕвĕсен символĕ пулса тăракан йата, со-вет халăхĕн моралĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕн символĕ пулса тăракан йата—Сталин йатне колхозлă йал ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама канди-датсем палăртнă чухне чи малтан асă-нать.

Колхозниксемпе колхозницăсем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата Сталин йулташăн çывăх со-ратникĕсене — партипе Совет правител-ствин руководителĕсене палăртрĕç. Çа-вăн пекех тата депутата суйлама канди-дата малта пыракан вуншар çынсене—облаçсенчи партипе совет органĕсен ру-ководителĕсене, наукă тата искусствă деятелĕсене палăртрĕç.

Коллективизаци çулĕсенче колхозлă йалта хăйсен ĕçĕпе—халăх ĕçĕшĕн, со-циалисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăнипе кăтартнă, государствă ĕçĕсене туса пыма вĕренсе çитнĕ çынсем сахал мар ÿçсе çитĕнчĕç. Çак çынсене те—колхозлă хресченсен ывăлĕсемпе хĕрĕсене—совет йалĕ Аслă Советăн депутатне суйлама кандидата палăртать. Кун пек çынсем вĕ-сем—чапа тухнă комбайнер Оçкин, кол-хоз председателĕ Федор Грицко, йĕтĕн акса тăвакан Йевгенийа Арташева, лаша пăхакан Игамберди Шаимарданов, трак-торист Гусев, бригадир Утепбергенов та-та ыттисем те нумайăн.

Аслă Советăн пулас суйлавĕпе колхоз-лă йал пысăккăн интересленет. Суйлав саккунне ăнлантарнă чухнехи кашни сă-маха колхозниксемпе колхозницăсем, йе-диноличниксемпе йединоличницăсем тим-лесех итлеççĕ. Анчах кашни хресчен ăнлапмала, итлекенсен кирек те мĕнле ыйтусем çине тĕрĕс те ăнланмала ответ паракан чăннипех боłшевикла агитаци-пе пропагандăна пур çĕрте те йĕркелесе йарасси пулса çитеймен-ха. Хăшпĕр рай-комсем йалта суйлав участкисенче аги-таципе пропагандă ĕçне тăвасси çине халиччен пит сахал çаварăнса пăхаççĕ. Ку вăл чи малтан Кийев, Воронеж тата Одесса облаçĕнчи районсенчи парторгани-зацисене тивет. Йединоличниксем хуш-шинче, вĕсем суйлавçăсен чылайах пы-сăк отрйачĕ пулса тăраççĕ пулин те, агитаципе пропагандă ĕçне пит йапăх йĕркеленĕ.

Халĕ ĕнтĕ Аслă Совета депутата суй-лама палăртнă кандидатсене регистраци-лессине пур çĕрте те туса çитернĕ. Çав-на кура хăшпĕр çĕрте парторганизацисем çакнашкал ăнланнă: тĕп ĕçе ĕнтĕ туса çитернĕ, массăсем хушшинче суйлав аги-таципе пропагандине тума чарăнсан та йурать, тенĕ. Кунашкал шухăшланинчен сийенлĕрех-хи урăх нимĕн те пулас та çук. Суйлав кунĕччен йулнă вăхăтра агитаципе пропагандă ĕçне нумай хут вăйлатмала. Партипе совет организаци-сенчен хăшпĕрисем лăпланса тата çава-ра карса ларнипе тăшманла елементсем усă курнине манма йурамасть,—тăшманла елементсем вĕсем суйлав кампанинче пи-ре пакăçсем тума хăтланаççĕ, малашне те çакăн пекех хăтланĕç.

Йалхуçалăх çулĕн пит ырă итогĕсем йалта политикăла-массăлă ĕçсене анлăн туса пыма калама çук килĕшÿлĕ майсем туса пачĕç. Ку ĕçе пур майпа та анлăн сарса йарас пулать. Ку ĕçĕн тĕп задачи унăн пархатарлă тĕллевĕ—нумай мĕл-йунлă колхоз хресченĕсене Аслă Советăн суйлавне Ленинăн—Сталинăн аслă пар-тин йалавĕпе илсе çитересси пулать.

(„Правда" умстатйи).

Испанири фронтсенче

Испанири фронтсенче лару-тăру мал-танхи пекех улшăнмасăр тăрать.

Нойаберĕн 14-мĕшĕнче ирхине Мадрид фронтĕнчи фашиссен çарĕсем Мадридран 10 километр çурçĕр-хĕвеланăçнелерехри Аравака йалĕ патĕнчи республикă пози-цийĕсем çине атакă тума тăнă. Атакă-на сирсе пăрахнă. Тăшман позицийĕсем çине çур сехет хушши персе тăнă хыç-çăн республиканцăсем разведкăна ăнăç-лă туса ирттернĕ тата кайала чакнă пăл-хавçăсем тунă çар хатĕрĕсене пухса ил-нĕ.

Нойаберĕн 13-мĕшĕнче каçхине пăл-хавçăсем Серро Рохо йалĕнчен хĕвел-анăçнелли районра республиканцăсем çи-не çĕнĕрен атакăланă. Ку атакăран ха-йар çапăçу пулса кайнă, часах алла-ал-лăн тытăнса çапăçма пуçланă.

Фашиссен отрйачĕсем çапăçу хирĕнче нумай вилĕсем хăварса кайала чакнă.

(ТАСС).

ПСК(б)П Обком IV Пленумĕн решенисем

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн çекретарĕ С. П. Петров пирки йышăннă постановлени çинчен

ПСК(б)П Обком Пленумĕ, ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ С. П. Петров йулташа ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн секретарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă постановлени тĕрĕс, тесе шутлать.

Обком бÿровĕн кивĕ составĕнче, Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн, халăх комиссариачĕсен, ПСÇЛКС Обкомĕн, ПСК(б)П Шупашкар хули комитечĕн руководствинче нумай вăхăт хушши халăхăн тăшманĕсем—буржуалă-националиссем, троцкиссем тата вĕсене пулăшакансем (Зефиров, Читнайев, Суворовски, Кузнецов, Токсин, Никитин, Гр. Иванов, Харитонов) ларнă. Петров йул. нумай вăхăт хушши ПСК(б)П Обкомĕн секретарĕ пулса, çав тăшмансене ĕçе лартса пынă, вĕсемпе кĕрешмен, вĕсемпе çемйеленсе тата йăла тĕлĕшĕнчен çыхăнса кайнă,—çавăншăн ăна ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ çумĕнчи Партилĕ Контроł Комиссĕ бÿровĕ выговор панă тата асăрхаттарнă (Дортранс ĕçĕ).

Парти организацийĕ 1928—29 çулсенче Ełменĕн, А. Михайловăн, Гр. Ивановăн т. ыт. те контрреволюцилĕ буржуалă-националисла ушкăнне уçса палăртнă хыççăн, Петров йул. буржуалă националиссене арккатса тăкассине пурнăçа кĕртмеле туман, а вĕсене, ответлă ĕçсенче, çитменне парти Обкомĕн бÿровĕнче те хăварса, Чăваш республикĕнче социалисăм строителствин чи паха участкисенче чылайĕшĕнче контрреволюцилĕ сиенлĕ ĕçсем туса пыма май панă. Унтан та ытларах, 1932 çулта Ełмене пытарассине буржуалă националиссемпе килĕшÿлĕ пулнин демонстрацийĕ туса хунă, хăй ал пуснă некрологра—Ełмĕн партишĕн пĕтĕм чĕререн тăнă боłшевик пулнă, тесе каланă, çавна тунипе буржуалă националиссемпе кĕрешес ĕçре парторганизацийе тĕрĕс çул çинчен пăрса йанă.

Петров йул. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн февраł-мартри Пленумĕ хыççăн та тата ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ çумĕнчи Партилĕ Контроł Комиссин бÿровĕнчен çирĕп партвзыскани илнĕ хыççăн та хăйĕн политикăла йăнăшĕсене тÿрлетмен, тăшмансене уçса палăртас тĕлĕшпе хăйусăр пулнă тата чылай чухне тÿррĕмех хирĕç тăнă (Зефиров, Кузнецов ĕçĕсем т. ыт. те), çавна пула халăхăн тăшманĕсене чылайĕшне йулашки уйăхсенче тин—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ çумĕнчи Партилĕ Контроł Комиссин уполномоченнăйĕ ĕçе хутшăннипе—тăрă шыв çине кăларнă тата парти ĕретĕнчен кăларса ывăтнă.

Хăйĕн практикăлă ĕçĕнче Петров йул. парторганизацийе боłшевика тивĕçлĕ мар методсемпе йертсе пынă: кăшкăрса тăкнă, самокритикăна путарнă, руководствăра коллективлăха йышăнман, çĕнĕ кадрсене малала кăларса пырас тĕлĕшпе хăйусăр пулнă, ПСК(б)П аппаратне тата партин райкомĕсене ĕçе лартнă çĕнĕ работниксене пулăшман.

ПСК(б)П Обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулнă Йа. А. Андрейев, Петровпа пĕрле ĕçлесе, халăхăн тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе нимĕн те туман çеç те мар, вăл хăй халăхăн тăшманĕсемпе—троцкиссемпе тата буржуалă националиссемпе çыхăнса кайнă, вĕсене пулăшса пынă.

ПСК(б)П Обком бÿровĕн членĕ П. И. Иванов, ПСК(б)П Обком бÿровĕн членĕ пулнă П. Ф. Йурйев, ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци тата пичет пайĕн пуçлăхĕ Х. М. Раскин, „Красная Чувашия" хаçат редакторĕ пулнă М. П. Морозов, ПСК(б)П Обком пайĕсен пуçлăхĕсем пулнă А. П. Кузьмин, П. К. Карпов, И. А. Анисимов, Н. В. Жуков (ПСК(б)П Обкомĕн финанспа хуçалăх секторĕн пуçлăхĕ пулнă), Çĕрĕç халăх комиссарĕ пулнă. А. В. Василйев тата Çутĕç халăх комиссарĕ пулнă Й. С. Чернов облаçри 18-мĕш партконференци пуличченех халăхăн тăшманĕсемпе—халĕ тăрă шыв çине кăларнăскерсемпе (Суворовски, Никитин, Токсин, Кузнецов, М. Кузьмин т. ыт. те) ĕçлесе, вĕсене тăрă шыв çине кăларман, пĕтĕмпех урăхла—çав тăшмансене тăрă шыв çине кăларас ĕçре Партилĕ Контроł Комиссин ЧАСС Республикĕнчи уполномоченнăйне пур майпа та чăрмантарса пынă.

ПСК(б)П Обкомĕн IV-мĕш Пленумĕ йышăнать:

1. С. П. Петров йулташа ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕн ĕçĕнчен хăтарас тата ăна ПСК(б)П Обкомĕн бÿро составĕнчен те, пленум членĕнчен те кăларас.

ПСК(б)П Обком бÿроне ăна парти йенĕпе ответ тыттарасси çинчен сÿтсе-йавма хушас.

2. ПСК(б)П Обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулнă Йа. А. Андрейева ПСК(б)П Обком пленум членĕ кандидачĕсен составĕнчен тата ПСК(б) Парти членĕнчен кăларас.

3. П. И. Иванов йул-ша ПСК(б)П Обком бÿровĕн составĕнчен кăларас тата „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн редакторĕнчен те кăларас.

4. А. П. Кузьмин, П. К. Карпов тата Н. В. Жуков йулташсене ПСК(б)П Обком пленумĕн составĕнчен кăларас, ПСК(б)П Обком бÿроне вĕсене парти йенĕпе ответ тыттарасси çинчен сÿтсе-йавма хушас.

5. ПСК(б)П Обком бÿроне ПСК(б)П Обкомĕн партилĕ агитаципе пропагандă тата пичет пайĕн пуçлăхĕ Х. М. Раскин çинчен пур материалсене пăхса тухма, вăл ПСК(б)П Обком аппаратĕнче малашне ĕçлесси пирки решени йышăнма хушас.

6. Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ пулнă А. В. Василйева тата „Красная Чувашия" хаçат редакторĕ пулнă М. П. Морозова ПСК(б)П Обком пленум членĕсен составĕнчен кăларас.

7. ПСК(б)П Обкомĕн бÿроне ПСК(б)П Обком бÿровĕн членĕсем пулнă П. Ф. Йурйев, Çутĕç халăх комиссарĕ пулнă Й. С. Чернов тата ПСК(б)П Обкомĕн йертсе пыракан парторганĕсен пайĕн пуçлăхĕ пулнă И. А. Анисимов партире тăрасси çинчен сÿтсе-йавма хушас.

8. Пленум çакна кăтартса парать—Обком бÿровĕн çĕнĕ составĕ Обкомăн пĕрремĕш секретарĕ пулнă Петровăн руководствăри йурăхсăр меточĕсемпе политикăла йăнăшĕсене татăклăн тăрă шыв çине кăларман, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн февраł-мартра пулнă Пленумĕн решенисене тата Сталин йулташ халăхăн тăшманĕсене—буржуалă националиссене, троцкиссене, бухаринцăсене тата ытти двурушниксене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларма тата кăкласа пĕтерме кăтартса панисене пурнăçа кĕртме парторганизацийе çителĕклĕ мобилизацилемен.

Пленум çапла шутлать: Обком бÿровĕн хăйĕн çав йăнăшĕсене боłшевикла тÿрлетмеле те парти совет тата хуçалăх организацисен пĕтĕм ĕçне кĕске вăхăтрах çĕклентерсе йамала.

Пленум парторганизацийе самокритикăна тата анлăнрах сарма ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн февраł мартри Пленумĕ йышăннă решенисемпе Сталин йулташ кăтартса панисем тăрăх ĕçлесе, халăхăн тăшманĕсене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларса, тĕпĕ-тымарĕпе кăкласа пĕтерме мобилизацилеме, партин шалти ĕçĕсене вăйлатма тата облаçри парторганизацин пĕтĕм ĕçĕсене çÿлĕрех пусăма хăпартма чĕнет.

Финанс ĕçĕ çинчен

Партин Чăваш Облаç Комитечĕн IV-ш Пленумĕ республикăра финанс ĕçĕ пачах çителĕксĕр тесе шутлать.

Суту-илÿ организацисем, промышленнăç предприйатийĕсем тата коммуналлă çуртйĕр хуçалăхĕ финанс планне калама çук йапăх тултарса пыраççĕ, массăлă тÿлевсем тăрăх та, халăхăн ирĕклĕ укçи тенкине пухас йенĕпе те план питĕ çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать.

Йалсоветсен займ укçине пухас йенĕпе ĕçлекен уполномоченнăйĕсем тата госкредита пулăшакан комиссисем нумай çĕрте нимĕн те ĕçлемеççĕ. Райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсем займ йенĕпе пухăнакан укçа-тенкĕ пирĕн çĕршывăн оборонине тĕреклетнĕ çĕре, çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем тунă çĕре, шкулсем, болłницăсем т. ыт. тунă çĕре кайни çинчен подписчиксене йапăх ăнлантарса параççĕ.

Финанс органĕсенче тата уйрăмăнах суту-илÿре сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пит те йеринен пĕтерсе пыраççĕ, ĕçе урăхлатса çĕнетесси пит те йăвăррăн пырать. Райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсем финплана тултарас ĕçрен пăрăннă. Йалсовечĕсене налогсем пухас ĕçрен хăтарса çав ĕçе финанс органĕсене панине райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсем хăйсене финплана тултарас обйазаннăçсенчен йалтах хăтарнă пек ăнланса илнĕ.

Райĕçтăвкомсем, йалсовечĕсем, çавăн пекех тата выранти парти организацисем халăха çакна кирлĕ пек ăнлантарса паман: колхозник тата йединоличник тÿлекен кашни тенкĕ палăртса хунă срукра государствă кассине кĕмеле, çав укçа-тенкĕ халăхăн хăйĕн задачисене пурнăçа кĕртнĕ çĕре—шкулсем, болłницăсем, агрономи участкисем т. ыт. тунă çĕре кайать.

Парти Обкомĕн Пленумĕ çапла шутлать: совет, хуçалăх тата уйрăмăнах суту-илÿ организацисенче чылайĕшĕнче чи кирлĕ дисциплинă çук, государствă интересĕсемпĕн, халăх интересĕсемпĕн тăрăшни çук, йĕркесĕрлĕх пысăк. Суту-илÿ организацисенче растратăсем, çаратусем, тавар тухманнисем тем пекех пысăк тата çавсемпе калама çук йапăх кĕрешеççĕ. Бÿджетпа финанс дисциплинине пăсуçĕ, ответлă ... çинчен тунă саккунсене шута хуманни ахалех иртсе кайать.

Хуçалăх органĕсен руководителĕсем государствă умĕнчи ответлăха, уйрăмăнах финанс обйазателствисене ĕçе кĕртессишĕн тытас ответлăха манса кайнă, финанс органĕсем контроł туса пыман, хуçалăх организацийĕсенче бÿджетпа финанс дисциплинине мĕнле тытса пынине тĕрĕслесе тăман.

Ĕç çавăн пек пулса пынипе рабочисемпе хресченсен тăшманĕсем усă курса, хуçалăха аркатма тăрăшнă. Çакă вăл выранти промышленнăç предприйатийĕсем, коммуналлă хуçалăх тата суту-илÿ организацийĕсем иртнĕ 10 уйăх хушшинче бÿджета нумай укçа-тенкĕ паманни патне илсе пычĕ, çакăн пирки те халăх хуçалăхне тата социаллă-кулłтурăлă ĕçсем валłли укçа парса тăрасси пысăк йăвăрлăха кĕрсе ÿкрĕ.

Финанс йенĕпе тата бÿджета пурнăçа кĕртес йенĕпе Шупашкар, Ишлей, Шăмăршă, Канаш, Трак тата Улатăр районĕсем пуринчен те йапăх ĕçлеççĕ.

Финанс ĕçне татăклăн хăпартассишĕн, промышленнăç предприйатийĕсен ĕçне хăпартассишĕн тата суту-илÿве анлăн сарса йарассишĕн кĕрешесси пĕтĕм парторганизацин тата мĕн пур советсен вирлĕ задачи пулса тăрать.

Пленум райĕçтăвкомсене, йалсовечĕсене, çавăн пекех тата парти организацийĕсене пурне те халех финанс ĕçне хăпартма, ĕçе кирлĕ пек организацилесе, ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ тĕлне—декаберĕн 12-мĕш тĕлне — пирĕн республикă пур тÿлевсем йенĕпе те çулталăк финпланне срукчен тултарнине çитмеле тума хушать.

Çавна пурнăçа кĕртме çитес кунсенчех финанс активĕн районри канашлувĕсене пухса ирттермеле, хула совечĕсемпе йалсовечĕсен çумĕнчи финанс секцийĕсен ĕçне чĕртсе йамала, çавăн пекех тата районри, йалти, колхозри комсодсен ĕçне организацилемеле, займ тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсен ĕçне куллен кун контроł туса пымала, вĕсене пулăшса тăмала, финанс активĕпе ĕçлессине финплана тултарма кирлĕ паха условисем выранне хурса, малашне финанс активĕпе тăтăшах ĕçлемеле.

Пленум Обком бÿроне тата Халăх Комиссарĕсен Советне финанс дисциплинине пăсакансене хирĕç, государствă умĕнчи обйазателствăсене ĕçе кĕртессипе государствăна хирĕçле туртăм палăртакансене хирĕç хайаррăн кĕрешсе пыма, социалисăмлă харпăрлăха çаратакансене çирĕппĕн айăплама, йĕркесĕрлĕхе пĕтерме, халăх хуçалăхĕнче пур çĕрте те çирĕп дисциплинăпа ответлăх тума хушать.

Пленум Прокуратурăна тата Йустици халăх комиссариатне растратчиксем çинчен суда панă ĕçсене чи кĕске срукра пăхса тухма хушать.

Финанс халăх комиссариачĕ йенĕпе ревизорсен ĕçĕ, халăх комиссариачĕсемпе тĕп хозорганĕсен йенĕпе ведомствăлă контроł, çавăн пекех тата выранти советсенче, кооперативсенче ревизи комиссисен ĕçĕ пачах çителĕклĕ мар, тесе шутласа, Обком Пленумĕ контроł работникĕсене пурне те контролпе ревизи ĕçне татăклăн вăйлатса йама хушать.

Финанс органĕсен системинче кадрсем тĕлĕшпе ĕç питех те латлă маррине, вăл органсенче, пуринчен ытла Финанс халăх комиссариачĕпе районсенчи финанс пайĕсен аппаратĕнче халăх тăшманĕсем тата ытти тивĕççĕр елементсем ларнине шута илсе, Пленум Финанс халăх комиссариатне тата ПСК(б)П райкомĕсене финанс работникĕсене пурне те тĕрĕслесе тухма тата декаберĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, практикăлă ĕçре ÿснĕ, выранта ĕçлекен çынсене куçарса лартни урлă, финанс аппаратне политикă тĕлĕшĕнчен тĕрĕсленнĕ, парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлекен çынсемпе тĕреклетме тата финанс работникĕсен политикăла пĕлÿвĕпе ĕçлĕ квалификацине ÿстерес ĕçе организацилеме хушать.

Пленум Обком бÿроне Финанс халăх комиссариачĕн йертсе пыракан аппаратне тĕреклетме çитес 10—15 кун хушшинче çынсем суйласа илме хушать.

Обком пленумĕ совет, хуçалăх тата суту-илÿ организацисенче ĕçлекен коммунисене пурне те сыхăлăха ÿстерме, совет саккунĕсене çирĕп тытса пырас ответлăха, государствă дисциплинине финанс дисциплинине тĕреклетес ответлăха ÿстерме хушать.

Китайри вăрçă

Шанхайа хÿтлекен Китай çарĕсен тĕп вăйĕсем хулана хăварнă хыççăн, унран Хĕвеланăç йенеле, Йапонцăсене Нанкина пыма çул пÿлсе çĕнĕ, Шанхай—Нанкин чукунçулĕ тăрăх малтанах хатĕрленĕ позицине куçнă. Вăйлă çапăçусене Лÿхе йалĕнчен пуçласа Шанхай—Нанкин çулĕ таран тата унран кăнтăралларах Шанхай—Ханчжоу чукунçул çинчи Цзйашаł станци районĕнче фронтăн пĕтĕм линийĕ тăрăхах пыраççĕ. Йапони самолочĕсем нойаберĕн 14-мĕшĕнче Шанхай—Нанкин чукунçул çинчи чылай хуласем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе çавнашкалах Цзйашаł станцине те вăйлă çĕмĕрсе тăкнă.

Йапонцăсем хăйсем йышăнса каланă тăрăх, вĕсене тытса илнĕ çурçĕр Китайри районĕсене ниепле майпа та алла çаварса илме май пулман.

Йапони çарĕсем чукунçулсем тăрахĕнчи ансăр выранта çеç çирĕпленнĕ. Çурçĕр провинцисен пĕтĕм ытти пайĕсенче Китай çарĕсен йышлă отрйачĕсем çапăçаççĕ. Вĕсем выранти халăхсемпе таччăн пĕрлешсе Йапони çулĕсене ватса çĕмĕреççĕ тата уйрăм хуласене тытса илеççĕ.

Йулашки икĕ кун хушшинче Тйанłувил—Пукоу чукунçулĕнчи фронтра Шанłдун провинцин çурçĕр пайĕнче тепĕр хут çапăçусем пуçланнă. Китай çарĕсем Лин—И тата Шанхе хулисене çирĕп хÿтĕлеççĕ. Нойаберĕн 12-мĕшĕнче вуннăран кайа мар алла аллăн тытăçса çапăçнă. Ку çапăçусенче Йапони çарĕсем пысăк сухатусем тунă.

(ТАСС).

М. И. Калинин йулташ йутçĕршыв рабочи делегачĕсемпе калаçни

Совет Сойузне Октябĕр уйавне ирттерме килнĕ йутçĕршыв рабочи делегацийĕсем нойаберĕн 15-мĕшĕнче Ĕç Двореценче М. И. Калинин йулташпа тĕл пулнă.

Михаил Иванович Калинин залăра курăнсан, хĕрÿлĕ хаваслăнса кăшкăрса алă çупса кĕтсе илнĕ. М. И. Калинин йулташа пурте ура çине тăрса саламланă.

Йутçĕршыв хăнисемпе калаçнă калаçура М. И. Калинин йулташ йутçĕршыв делегачĕсем панă ыйтусене тĕплĕ ответленĕ. М. И. Калинин йулташ калаçнине çавăнтах темиçе чĕлхе çинех куçарса панă.

Кун хыççăн сăмах туха каланă Мексикă, Кăнтăр Африкă, Англи, Чехословаки тата ытти йутçĕршыв делегацисен представителĕсем Совет Сойузĕ çирĕм çул хушшинче тунă пĕтĕм тĕнчери—историлĕ çитĕнÿсемпе тĕлĕнни çинчен пĕлтернĕ тата Совет Сойузĕ лăпкă саманан чи шанчăклă тĕрекĕ пулса тăрать, тенĕ.

Делегатсем Йапони—Германи фашисăмне сутăннă троцкисла-бухаринла тата ытти сутăнчăксем çинчен тарăхса, Совет правителствин халăхсен тискер тăшманĕсене хирĕç йышăннă мерăсене мухтаса каланă.

Залăра ларакан демократилĕ Испани республикĕн делегацине пурте тăвăллă алă çупнипе кĕтсе илнĕ.

Кăнтăр Африкăри рабочисен представителĕ Ендрÿс боłшевикла партин аслă политики çинчен, Сталин йулташ çинчен çĕкленÿлĕ каланă. Унăн сăмахĕ çумне Сталин йулташа хисеплесе тăвăллă алă çупса пурте пĕрлешнĕ.

(ТАСС).

Суйлав кампанин организацилĕ ыйтувĕсем çине кулленех çаварăнса пăхмала

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленесси организацилĕ-техникăлă ыйтусем çине пĕр ывăнмасăр çаварăнса пăхма хушать. Çапах та, хăшпĕр парти организацисен тата советсен руководителĕсем çав пысăк политикăлă ĕç пулса тăракан ыйтусем çине кирлĕ пек çаварăнса пăхмаççĕ.

Иркутск Çурçĕр суйлав округĕнче 499 суйлав участки тунă, суйлавçăсен списокисене 275 участкăра çеç тунă. Суйлав валłли хатĕрленĕ çуртсем 150 суйлав участкин çеç пур. Айакри çурçĕр районĕсене нумайĕшне конвертсем те тăратман.

Саратоври Волжск райсоветĕнче суйлавçăсен списокисене судпа суйлав прависĕр хăварнă çынсем те сахал мар кĕрсе кайнă. Ку вăл судпа суйлав прависĕр хăварнă çынсем çинчен сведени паман суд органĕсен айăпĕпе те пулнă. Суйлав участкисене организацисене пĕтĕмĕшпех кĕртмен фактсем те тупса палăртнă. Тĕслĕхрен, комбайн завочĕн 1-ш номĕрлĕ совхозĕ хăйĕн суйлав участкине пĕлмест.

Домински суйлав участкинче (Мускав облаçĕнчи Раменский район) суйлав комиссийĕ таса мар клетре вырнаçнă. Телефон çук. Строкинск суйлав участкинче, пĕр пĕчĕкрех сĕтелпе тенкелсĕр пуçне, нимĕн те çук.

(ТАСС).

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас умĕн

Йăнăшсене халех тӳрлетмеле

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас кампани анлăн сарăлса пырат. Пирĕн республикăра халĕ суйлав саккунĕнче кăтартса панă тăрăх Суйлав округĕсем, суйлав участкисем тата суйлав комиҫҫисем туса ҫитернĕ. Республикăра 969 суйлав участки. Вĕсем пурте ĕҫе тытăннă. Пур районсенче те суйлав комиҫҫи членĕсемпе уйрăм канашлусем туса ирттернĕ. Суйлав комиҫҫисене чи лайăх ҫынсене—стахановецсене, обществăлла пурнăҫра активлă ĕҫлекен ҫынсене суйланă.

Пур районсенче те суйлавҫăсен спискисене туса пĕтернĕ. Нумай ҫĕртре ку ĕҫе хăй вăхăтĕнче йĕркелĕ туса панă. Анчах пур ҫĕртре те мар. Шупашкар райĕҫтăвкомĕ суйлавҫăсен спискине Шемшер больницине Алгешри „Пăха тĕр" арасти ертелти суйлавҫăсене кĕртме „манса" хăварнă. Вăрнар райĕҫтăвкомĕн председателĕ пулнăскер Афиногенов хăй тĕллĕнех Мачамăшри тата Ҫĕнйал Нурăсри суйлав участкисене пĕтерсе хунă. Вăл участкăсене Нурăсри участкăпа пĕрлештернĕ. Суйлавҫăсене суйлав участкине ҫӳреме инҫе.

Йетĕрне хула совечĕ суйлав участки центăрне тĕрмене вырнаҫтарса шутланă. Сăрă шывĕ леш йенчи заводсенчи суйлавҫăсене Йетĕрне хулине ҫӳремелле тунă. Парачкав районĕнче икĕ суйлав участки тăрăх 170 ҫынна суйлавҫăсен спискине кĕртмесĕр сиктерсе хăварнă. Хуракасси йалсоветне кĕрекен Туҫи йалĕнче (Шăхасан р.) суйлавҫăсен спискине килхуҫисене ҫеҫ кĕртнĕ. Ҫемйери ытти ҫынсене суйлама ҫул ҫитнисене те суйлавҫăсен спискине кĕртмесĕр хăварнă. Ҫакăн пек йăнăшсем Шупашкар, Вăрнар, Йетĕрне тата Парачкав районĕсенче ытларах пулчĕ. Вăл ҫитменлĕхсем ытти районсенче те пур. Ҫавăнпа та райĕҫтăвкомсен, хула совечĕсен, йалсовечĕсен тата суйлав участкисен суйлавҫăсен спискисене тĕрĕс тунине халех тепĕр хут тĕрĕслесе тухас пулат.

Суйлавҫăсен спискисене тума Чăваш Тĕпĕҫтăвкомĕ вырăнсене 59 пин бланка йарса панă. Вăл кашни участкăрах суйлавҫăсен спискине виҫшер екземпљар тума ҫитет. Анчах хăшпĕр районсенче суйлавҫăсен спискисене типтерлĕ тума тăрăшман, бланкăсене усăсăр пăсса пĕтернĕ. Акă Кувакинă районĕнче 1000 бланкă, Парачкав районĕнче 500 бланкă пăсса пăрахнă.

Суйлав участкисен ҫурчĕсене, пӳлĕмĕсене илемлетме, куљтурлă сăн кӳртме тата суйлавҫăсен хушшинче куљтурлă-массăллă ĕҫе йĕркелеме ССР Союзĕн Аслă Совечĕн Союз Советне суйлакан суйлав участкисене 450 тенкĕшер, Национаљнăҫсен Советне суйламалли округ суйлав комиҫҫисене 8 пиншер тенкĕ панă. Укҫа тенкĕ ытлин-ҫитлинех панă пулсан та, Ҫĕмĕрле, Йетĕрне, Улатăр, Елĕк, Вăрнар, Тăрхан тата ытти районсенче те суйлав участкисенче суйлавсем иртмели ҫуртсемпе пӳлĕмсене ку таранччен те йĕркелесе ҫитереймен-ха. Ку районсенче суйлав иртмели пӳлĕмсемпе ҫуртсене илемлĕ, куљтурлă сăн кӳртес тĕлĕшпе ҫителĕклĕ ĕҫлемеҫҫĕ.

Пронин.

Хамăр сасса Стецкий йулташа паратпăр

ИШЛЕЙ (телефон тăрăх). Питех те чухăн пурăннă ĕлĕк Киштерекри Марков Роман йулташ. Ҫитмен пурнăҫ вирки, вăл пуйансем патĕнче ĕҫлесе нумайччен асапланнă, анчах та хайĕн пурнăҫне ҫапах та йусайман. Ҫитменнине Марков йулташ арăмĕ вилсен 5 ачапа йулат. Унăн пурнăҫĕ татах та йăварланат.

Совет влаҫĕ ăна пур нушалăхран хăтарчĕ. 1932 ҫулта Марков йулташ „Самољот" колхоза кĕрет. 1936 ҫулта кивĕ, лапчăнса ларнă пӳрт вырăнне пысăк шурă пӳрт лартат. Халĕ унăн пӳрчĕ калама ҫук илемлĕ, кантăксем умĕнче чечексем ҫитĕнеҫҫĕ, стена ҫумĕнче тĕкĕр, сехет тата портретсем. Унăн ачисем те халĕ ҫитĕннĕ. Вĕсем пуйăн та куљтурлă пурнăҫпа савăнса пурăнаҫҫĕ.

Аслă ывăлĕ, Димитрий, виҫĕ ҫул хушши ĕнтĕ колхоз бригадирĕнче ĕҫлет. Ăна лайăх ĕҫлесе пынăшăн колхоз правленийĕ икĕ хутчен укҫа тата парнесемпе наградăланă. Йелизавета районри колхоз шкулĕнче садоводсен уйрăмĕнче вĕренсе тухнă. Кăҫал вăл колхоз пахчинче 1.100 тĕп вишни, 800 тĕп слива лартса хăварттарчĕ. Ҫулла пахча-ҫимĕҫ бригадин бригадирĕ пулса ĕҫлерĕ. Петрпа Йеленă та колхозра лайăх ĕҫлесе пыраҫҫĕ. Марков йулташ 60 ҫулта. Ватă пулсан та чĕрипе хайĕн ачисем пекех ҫамрăк. Вăл 5 ҫул хушши ĕнтĕ пĕр таталмасăр колхоз арманĕнче мелник пулса ĕҫлет. Кăҫал Марков йулташăн ҫемйи 1092 ĕҫкунĕ туса 343 пăт тĕш тырă илет.

Декаберĕн 12-мĕшĕнче Марков йулташăн ҫемйинчен 6 суйлавҫă совет суйлавне хутшăнаҫҫĕ. Ҫемйери суйлавҫăсем кружока ҫӳресе суйлав саккунне вĕреннĕ. Вĕсем суйлав хăш кун, хăш вăхăтра тата суйлав пӳлĕмĕ ăҫта пулнине лайăх пĕлеҫҫĕ.

— Епĕр ПСК(б)Парти Тĕп Комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пуҫлăхĕ, Сталин йулташăн ҫывăх соратникĕ А. И. Стецкий йулташ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх Национаљнăҫсен Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшӳ панине пĕлетпĕр. Стецкий йулташ пирĕн Суйлав Округĕ тăрăх Национаљнăҫсен Советне суйланма баллотировкăна тăни пире савăнтарат. Епĕр хамăр сасса Стецкий йулташа паратпăр,— теҫҫĕ Марков йулташ ҫемйинчи суйлавҫăсем.

В. Сергейев.

Ӳкерчĕк ҫинче: ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫи членĕсем М. К. Симонженкова (сылтăмра) тата Т. П. Шаповалова йулташсем Тĕп Комиҫҫи ĕҫĕсене тăваҫҫĕ.

Е. Йовзерихин фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото)

Суйлав саккунне пăсмала мар

„ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенин" 7, 8, 9, 10 тата 11-мĕш статйисем суйлавҫăсен спискине камăн тата мĕнле йĕркепе тумалине тĕплĕн кăтартса панă. Анчах райĕҫтăвкомсен, хулапа йал советсен хăшпĕр руководителĕсем „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" пăхăнмасăр суйлав саккунĕн уйрăм статйисене пăснă. Шăмăршă районĕнчи Шăмат йалсоветĕнче Н. А. Архипова гражданкăна халхасăр-чĕлхесĕр тесе тата Чаткас йалсоветĕнче тин ҫеҫ Хĕрлĕ ҫартан таврăннă красноармейеца суйлавҫăсен спискине кĕртмесĕр хăварнă. Патерек йалсоветĕнче нойаберĕн 5-мĕш числиччен йалсоветĕнчен йут ҫĕре тухса кайнă ҫынсене те суйлавҫăсен спискине кĕртнĕ. Елĕк районĕнче суйлавҫăсен спискине пĕр ҫынна икĕ спискăна кĕртнĕ.

Нумай районсенче суйлавҫăсен спискине „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенин" 10-мĕш статйине пăсса тунă. Пуйанкасси йалсовет секретарĕ (Шăмăршă р.) суйлавҫăсен спискине суйлавҫăсенчен ыйтмасăр, йалсоветри хуҫалăх кĕнеки тăрăх тунă. Хăшпĕр районсенче суйлавҫăсем ăҫта пурăннине кăтартман, ун вырăнне кавычкă кăна лартнă. Шăнкăртам районĕнче суйлавҫăсен йатне, ашшĕ йатне тата хушаматне тĕрĕс мар ҫырнă. Патăрйел районĕнчи нумайĕш йалсоветсенче спискăсене алфавит йĕркипе туман.

Нойаберĕн 10-мĕш числиччен суйлавҫăсен спискине тума тытăнман йалсоветсем те пулнă (Патерек, Шамкинă). Ҫапла вара вĕсем суйлав саккунĕ кăтартнă срука пăснă. Нумай районсенче ҫак тарана ҫитсе те суйлав иртермели ҫуртсене йĕркене кĕртме тытăнман. Уйăрнă ҫуртсенчен хăшпĕрисем суйлав ирттерме килĕшӳлĕ мар. Йетĕрне тата Трак райĕҫтăвкомĕсем суйлав ирттермели ҫуртсене шăналăкпа тата чăптапа пӳлсе уйрăмсем тума йалсоветсене кăтарту панă. Кунашкал фактсем ытти ҫĕрте те нумай.

Шăмăршă тата Шăнкăртам районĕсенчи клубсем, вулав ҫурчĕсем, хĕрлĕ кĕтессем куљтурлă-массăлă ĕҫе ҫителĕксĕр туса пыраҫҫĕ. Вĕсенче ҫĕнĕ Конституци, суйлав саккунĕ тата ытти литературă ҫителĕксĕр, хăшпĕр ҫĕрте ҫукпа пĕрех. Вулав ҫурчĕсен пуҫлăхĕсем тата райҫутĕҫпайĕсен работникĕсем хăйсене тивĕҫлĕ ĕҫĕсене туса пымаҫҫĕ.

Суйлав кунĕ ҫывхарса ҫитет. Пропагандăпа агитаци ĕҫне тата анлăрах сарса, ĕҫҫыннисен политикăла сыхăлăхне тата активлăхне ӳстерсе, суйлав кунне ăнăҫлăн хатĕрленсе кĕтсе илмеле, ССР Союзĕн Аслă Советне суйлассине бољшевикла ирттермеле.

Й. Муратов.

Хĕрлĕ ҫар 10 ҫул тултарнă йатпа тăракан фабрикри рабочисемпе служăщчисен пĕрлехи пухувĕ тата Хрушчов йачĕпе тăракан колхозри (Мускав облаҫĕ) колхозниксен пухувĕ Аслă Совет депутатне суйлама Дрезненскри пиравăр фабрикĕнчи ткачихă-стахановкă Прасковйа Илйинична Голубева кандидатурине тăратнă.

Ӳкерчĕк ҫинче: П. И. Голубева (сылтăмра) кăнтăрла каннă вăхăтра ткачихă-стахановкăсене суйлав кампанийĕ мĕнле пынипе паллаштарат. Сулахайран сылтăмала—комсомолка О. И. Рысева (8 станокпа ĕҫлет), У. Ф. Зимина выдвиженкă—стахановла шкулăн директăрĕ, Е. Г. Кукушкина (12 станокпа ĕҫлет) тата Е. Д. Молчанова (12 станокпа ĕҫлет). А. Грибовски фото-ӳкерчĕкĕ.

Ҫулталăкри плана суйлав кунĕ тĕлне тултаратпăр

СĔНТĔРВĂРРИ. Деткомиҫҫин чĕ. Ҫавăн пекех Романов рабочи кампа-пичке тăвакан заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртура Ҫĕмĕрлери заводпа ăмăртса ĕҫлерĕҫ. Ăмăртса ĕҫлени пысăк ӳсĕмсем тума май пачĕ. Завод ҫентябĕр уйăх планне 101,8 процент, октябĕр уйăх планне 103 процент тултарчĕ.

Заводра стахановецсен йышĕ нумай ӳсрĕ. Иртнĕ ҫулта пĕтĕмпе те 5 стахановец пулнă пулсан, кăҫал Октябĕр уйавĕ тĕлне стахановецсемпе ударниксен ретĕнче 36 ҫын шутланаҫҫĕ. Вĕсем пурте лайăх пахалăхпа ĕҫлеҫҫĕ. Копылов рабочи стахановла ĕҫлеме тытăниччен ĕҫ укҫи 200 тенке йахăн илнĕ пулсан, Октябĕр уйăх планне 227,5 процент тултарса 1.015 тенкĕ илчĕ. Ҫавăн пекех Романов рабочи нормăна 227 процент тултарса 1008 тенкĕ илнĕ. Ку таринчен ударник пулнă работниксем халĕ стахановецсен ретне тăчĕҫ. Акă Сундырцов рабочи октябĕр уйăх планне 187 процент, Зимин 199 процент, Соснин 173 процент, Исайев 155 процент тултарчĕҫ.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ май стахановла йухăм вăйланнăҫемĕн вăйланса пырат. Нойаберĕн 2-мĕшĕнче заводра металлургсен канашлăвĕ чĕнсе каланине сӳтсе йавреҫ. Кун хыҫҫăн заводри рабочисем пурте пĕр кăмăлпа ҫулталăкри плана ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кун тĕлне тултарма пулчĕҫ.

В. Василйев.

Вĕсен пурин те тăрăшса ĕҫлес килет

Вăрнар районĕнчи Тĕмпекри Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра опыт тăвас тĕлĕшпе икĕ стахановла звено ĕҫлерĕ. Пĕррем̆ĕш звенона Иванов Григорий колхозник йĕркелесе пычĕ. Ку звено хайĕн ҫумне 1,5 гектар тулă, 1,5 гектар сĕлĕ ҫирĕплетнĕ. Ҫав ҫĕр ҫинче агротехника хушнă пек ĕҫленĕ. Минерал ҫăнăхĕсемпе ҫителĕклĕ таран усă курнă. Пĕтĕм вăрлăха йаровизацилесе акнă. Ҫĕре лайăх сухаласа ҫемҫетнĕ. Ҫумкурăкĕсемпе хастарлă кĕрешнĕ. Ҫапла майпа ку звено гектартан 200-шер пăт тĕш тырă туса илнĕ.

Иккĕмĕш звенона Птичкин Петр йĕркелесе пынă. Ку звено та пĕррем̆ĕш звено пекех ĕҫлесе гектартан 200-шер пăт тырă туса илнĕ.

Ҫак стахановла звеносем ҫитес ҫул тата ытларах тырă туса илмели майсене халех палăртса пыраҫҫĕ.

Колхоз тĕрекленсе пынипе пĕрлех—колхозниксен пурнăҫĕ те улшăнсах пырат. Иккĕмĕш бригадăра Илйин Никифор колхозник начар пурнăҫпа пураннă. Тăлăхăн ӳснĕ вăл. Ҫиме нихăҫан та тырă ҫитмен, ыљăх чĕрлĕх усрайман. Кулаксен ĕҫне нумай ĕҫленĕ. Халĕ Илйин лайăх пурнăҫпа пурăнат. Ҫуртсем ҫителĕклĕ, пӳртне ҫĕнĕрен лартнă. Кирек мĕнле ĕҫре те кулленхи ĕҫ нормине ытлашшипех тултарса пырат. Кăҫал вăл хăй пĕччен ĕҫлесе 200 пăт тĕш тырă илет.

— Ҫакăн чухлĕ тырă уйрăм хуҫалăхра нихăҫан та курас ҫук. Колхоз ҫеҫ ҫакăн пек пурнăҫ туса пачĕ. Халь епĕ тулăх пурнăҫпа пурăнатăп. Тулăх пурнăҫ туса панăшăн Сталин йулташа, партипе правителствăна чĕререн тав тăватăп,—тет вăл.

Моисейев Андрей ҫемйи те ĕлĕкхи вăхăтра тулăх пурнăҫпа пурăнман. Колхоза кĕрсе, тӳрĕ ĕҫленипе ҫеҫ вăл лайăх пурнăҫа курчĕ. Выљăх-чĕрлĕхсем килкарти тулли усракан пулчĕ.

Илйинпа Моисейев пек тăрăшса ĕҫлекен колхозниксем колхозра нумай. Йашков Илйа, Баков Федор, Йефимов Осип, Алексейев Гордей колхозниксем колхозра тăрăшса ĕҫленипе кашнийех 300-шер пăт тĕш тырă илеҫҫĕ. Вĕсен кашнин пĕр шут—тăрăшса ĕҫлесси.

Колхоз кăҫал тунă ҫитĕнӳсемпе лăпланса лармаст. Ҫитес ҫулта тата ытларах тырă туса илессишĕн халех вăйлă кĕрешме тытăнчĕ.

Ник. Козлов.

Коротковăн ҫĕнĕ ҫĕнтерӳвĕ

ҪĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Комбинатри столљарнăй цехра савалакан 4 йенлĕ станок ҫинче ĕҫлекен Михаил Коротков, ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли куна—декаберĕн 12-мĕшне ĕҫре ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленет. Нойаберĕн 9-мĕшĕнче Коротков йулташ ĕҫре ҫав тери пысăк ҫĕнтерӳ турĕ. Вăл сĕтел царгĕсене савалаcа, пĕр кунхи ĕҫ нормине 360 процент тултарчĕ.

Хар. Лисин.

Камшăн сасăлама кирли ҫинчен калакан цифăрсемпе фактсем

ССР Союзĕн халăх хуҫалăхĕнче социалисăмла системă пур ҫĕрте те пуҫ пулса тăрат. 1936 ҫулта социалисăмла хуҫалăхăн виҫи пĕтĕм промышленнăҫ продукцинче 99,8 процент хисепленнĕ, йалхуҫалăхĕн пĕтĕм продукцинче (колхозниксем хăйсем усă куракан хуҫалăхне шутласа) 97,7 процент, суту-илӳ предприйатисĕн вăйĕ суту-илӳвĕнче 100 процент хисепленнĕ.

ССР Союзĕнче урăх ҫын вăйне експлоатацилени ҫавче никĕсленсе тăракан капиталисăмла уйрăм харпăрлăх ҫук. Пирĕн ҫĕршывăн икĕ тĕслĕ харпăрлăх пур: пĕтĕм халăх (государствă) харпăрлăхĕ, кооперативлă-колхозлă харпăрлăх, урăхла каласан, уйрăм колхозниксемпе кооператив пĕрлешĕвĕсен харпăрлăхĕ. Социалисăмла колхозлă харпăрлăхпа йунашар тăракан колхозниксен уйрăм харпăрлăхĕ пĕтĕм халăх хуҫалăхĕнче 1,1 процент ҫеҫ йышăнса тăрат. Унта ҫын вăйне експлоатацилесси ҫук.

ССР Союзĕнчи халăхсен класлă составĕ тепĕренех улшăнчĕ. Експлоататăрла классене—помещиксене, хулари шултра тата вак буржуазине, ялсемҫисемпе кулаксене пĕтернĕ. Вĕсем 1913 ҫулта пĕтĕм халăх шутĕнче 15,9 процент пулнă. Пирĕн совет обществинче икĕ туслă класран—рабочисемпе хресченсенчен тăрат.

Капиталисăмла елементсене пĕтерни пĕтĕм дохода ĕҫҫыннисен аллине тата вĕсен государстви аллине йамала турĕ. Халăх дохочĕ 1913 ҫулта 21 мĕлйард тенкĕ пулнă пулсан, 1936 ҫулта (1926/27 ҫулти хакпа) 86 мĕлйард тенке ҫитиччен ӳсрĕ.

Патша Российĕ капиталисăмла государствăсен ҫурмаколонийĕ пулнă. Йутҫĕршыв буржуазийĕ патша правителствине займсем панăшăн, промышленнăҫ предприйатисемпе банксене капитал хывнăшăн Российăран мĕлйард тенкĕ йахăн (ылтăнпа) услам шăйăрса илнĕ.

Ленин—Сталин парти йертсе пынипе ССР Союзĕ историлĕ кĕске срукрах кайа йулнă аграрлă тата чухăн ҫĕршывран хăватлă индустрилĕ ҫĕршыв пулса тăчĕ, шултра промышленнăҫ продукцийĕ ҫулран ҫулах ӳсcе пырат. Ҫав промышленнăҫ продукцин виҫи ССР Союзĕн шултра промышленнăҫпа йалхуҫалăх продукцисен пĕтĕм хисепĕнче кăҫалхи ҫул 77,4 процент шутланат. Пĕтĕм шултра промышленнăҫ продукцин пĕтĕм хисепĕ иртнĕ ҫулта (1926/27 ҫулти хакпа) 80,9 мĕлйард тенкĕ пулнă, 1913 ҫулта вăл пурĕ те 11 мĕлйард тенкĕ ҫеҫ пулнă.

Промышленнăҫ продукцин виҫĕ чĕрĕкне ытла совет влаҫĕ ҫĕнĕрен лартнă тата йăлтах урăхлатса ҫĕнетнĕ заводсем туса кăлараҫҫĕ. Социалисăмла индустри вăйлăн ӳснĕ май, ССР Союзĕн промышленнăҫĕ Йевропăра пĕррем̆ĕш вырăна, тĕнчере иккĕмĕш вырăна тухрĕ.

Социалисăмла ĕҫĕн тухăҫлăхĕ ӳсет. 1936 ҫулта (улшăнман хакпа) пĕр рабочи туса кăларнă продукци 1913 ҫултипе танлаштарсан, пĕтĕм промышленнăҫра виҫĕ хут ытла ӳснĕ. Шултра промышленнăҫра ĕҫтухăҫлăхĕ 21 процент ӳсрĕ.

Промышленнăҫ тата халăх хуҫалăхĕн пур отраҫлисене те реконструкцилес ĕҫре машинăсем тăвакан промышленнăҫа аталантарса пыни тĕп вырăнта тăчĕ. Машинăсем тăвакан промышленнăҫ продукци 1936 ҫулта 1913 ҫулхи продукцирен 28 хут йиртсе кайрĕ.

Кучухнехи хими промышленнăҫне, трактор, автомобил, станоксем т. ыт. тăвакан промышленнăҫа ҫĕнĕрен тунă. Тĕрĕссипе каласан, апат-ҫимĕҫ промышленнăҫне те ҫĕнĕрен тунă. Социалисăмла индустриализаци халăх хуҫалăхĕн пур отраҫлисене те реконструкцилеме май пачĕ.

ССР Союзĕ тĕнчери чи шултра социалисăмла йалхуҫалăхлă ҫĕршыв пулса тăчĕ. Октяберти Социалисăмла Аслă револљуци ҫĕре ҫĕнĕле валеҫрĕ. Патша Российĕнче помещиксем, патша таврашсем, монастырсем 152,5 мĕлйун гектар ҫĕр тытса тăнă. Експлоататăрсен ҫак ҫĕрне револљуци туртса илчĕ. Помещиксĕнчен, патша таврашĕсенчен, монастырсенчен туртса илнĕ ҫĕрсенчен 150 мĕлйун гектарне револљуциччен хресченсем хăйсем усă курнă ҫĕр ҫумне хушса панă. Колхоз стройĕ ҫĕнтернĕ май колхоз хресченĕсене кулаксен ҫĕрне 80 мĕлйун гектар панă. Халĕ колхозниксемпе йединоличниксен аллинче тӳлевсĕр тата ĕмĕрлĕхе усă курма панă 370, 8 мĕлйун гектар ҫĕр пур. Совхозсенче 51,1 мĕлйун гектар ҫĕр пур. Патша Российĕнче таварлă тырăн ҫурри кулаксен аллинче, помещиксен аллинче 21,6 процент пулнă. ССР Союзĕнче 1935-36 ҫулта пĕтĕм таварлă тырăран 96, 8 процентне колхозсемпе совхозсем тунă.

Колхоз стройĕ ҫĕнтернипе йалта чухăнлăха пĕтерне. Револљуциччен хресченсем хушшинче чухăнсем 65 процент, лашасăррисем 30 процент, инвентарсăррисем 34 процент, акмали ҫĕр ҫуккисем 15 процент пулнă. Совет йалĕнче лашасăррисем ҫук, инвентарсăррисем, акмали ҫĕрсĕррисем ҫук. Халљхи вăхăтра 18,5 мĕлйун хуҫалăх 243,7 пин колхозсене пĕрлешсе тăраҫҫĕ. Колхозсен акмали ҫĕр лаптăкĕ пĕтĕм хресченсем акакан ҫĕр лаптăкĕнчен 99,1 процент пулат.

Пирĕн ҫĕршывра 5.617 машинăпа трактор станци тунă, вĕсем колхозсен акмали ҫĕр лаптăкĕнчен 91,5 процентне ҫинче ĕҫлеҫҫĕ.

Кивĕ Российă—сухапуҫсен, косуљсен, йăваҫ плугăсемпе сӳресен ҫĕршывĕ—трактор тата комбайн ҫĕршывĕ пулса тăчĕ. Колхозсемпе совхозсен бази ҫинче йалхуҫалăх продуктисем тăвасси ӳсрĕ. Малтанлăха шутланă тăрăх, 1937 ҫулта тырă 6,8 мĕлйард пăт пулат, пирĕн социалисăмла тăван ҫĕршыв Сталин йулташ ҫулсерен 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илмеле тесе панă историлĕ кăтартува пурнăҫа кĕртесси патнех ҫывхарса ҫитрĕ. Йĕтĕн тата сахăр кăшманĕ тăвас тĕлĕшпе ССР Союзĕ тĕнчере пĕррем̆ĕш вăрăна тухрĕ ССР Союзĕнчи ҫĕреҫĕ вăрҫăчченхинчен икĕ хут ытларах продукци парат.

Транспорт пирĕн аслă ҫĕршывăн районĕсене пурне те пĕрлĕхлĕ ҫыхăнтарса тăрат. Совет влаҫĕ пулнăран вара ССР Союзĕ хăватлă чукунҫуллă державă пулса тăчĕ. 1913 ҫултипе танлаштарсан, 1936 ҫулта чукунҫул тăршшĕ 1,5 хут вăрăмланнă, грузсене 4 хут ытларах турттарнă. Пирĕн граждăн авиацийĕ гигантла ӳсрĕ. 1913 ҫулхипе танлаштарсан, грузовой автомашинăсен шучĕ 210 хут нумайланнă. Сталинла пиатилеткăсен ҫулĕсенче ҫăмăл автомашинăсен шучĕ 7 хут ӳсрĕ.

Ҫыншăн, ĕҫҫыннисен пурнăҫĕпе куљтурине хăпартассишĕн сталинла тăрăшасси коммунистсен партипе совет правителствин ĕҫĕнче тĕп вырăнта тăрат.

Пирĕн ҫĕршывра безработицăна ĕмĕрлĕхех пĕтерне. Капиталисăмла ҫĕршывсенче ĕҫҫыннисен нумай сийĕсен ĕҫ ҫук. Капиталисăмла 32 ҫĕршывра 1929 ҫулта ĕҫсĕррисем 5,9 мĕлйун ҫын пулнă пулсан 1920 ҫулта 20,5 мĕлйун ҫынна ҫитиччен ӳснĕ.

ССР Союзĕнчи пур граждăнсен те ĕҫлев, кану, вĕренӳ прави пур. ССР Союзĕнче ĕҫ кунĕ тĕнчери чи кĕски.

Ĕҫ тухăҫлăхĕ ӳсни тăрăх ССР Союзĕнчи рабочисемпе служăщчисен ҫулталăкри вăтам ĕҫукҫи (пĕтĕм халăх хуҫалăхĕ тăрăх) 1924-25 ҫулта 450 тенкĕ пулнинчен, 1936 ҫулта 2.276 тенке ҫитиччен ӳсрĕ. Социаљнăй страховани бӳджечĕ иккĕмĕш пиатилеткăн тăвата ҫулĕ хушшинче пĕррем̆ĕш пиатилеткăра 10 мĕлйард пулнă, халĕ 26,5 мĕлйард тенке ҫитиччен ӳснĕ. Кунсăр пуҫне, государствă тата профсоюзсем рабочисемпе служăщчисене куљтурăпа йăла тĕлĕшĕнчен пулăшма мĕлйардшар тенкĕ расхутлаҫҫĕ.

Капиталисăм пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă ĕҫҫыннисен сарлака массисем шутсăрах вĕренме тытăнчĕҫ. 1936 ҫул вĕҫĕ тĕлне шултра промышленнăҫри рабочисенчен виҫĕ пайĕ техникăла вĕренӳре пулнă, йе вĕренсе тухнă. 1934 ҫултан пуҫласа, кăҫалхи ҫулăн август уйăхне ҫитиччен тракториссемпе комбайнерсене тата шоферсене мĕлйун ҫурă ҫын вĕрентсе хатĕрленĕ. ССР Союзĕнче вĕренекенсен шучĕ пурĕ 38,3 мĕлйун ҫынна ҫитрĕ, 1914 ҫулта вĕренекенсем 8,1 мĕлйун ҫеҫ пулнă. Вăрҫăчченхипе танлаштарсан, аслă шкулсенче вĕренекенсен шучĕ пилĕк хута йахăн ӳсрĕ. Вăтам шкулсенче вĕренекенсен шучĕ 1936-37 ҫулта 1914 ҫулхинчен 18 хут ытларах, государствă халăха ҫутта кăларас ĕҫе йаракан расход ҫак йулашки вунă ҫул хушшинче 24 хут, наукă ĕҫне кайакан расходсем ҫав вăхăтра 29,5 хут, искусствă расхочĕ 119 хут ӳснĕ.

ССР Союзĕ клубсемпе, вулав ҫурчĕсемпе витĕнчĕ; библиотекăсем 1914 ҫулта 12,6 пин пулнă пулсан, 1936 ҫулта 55,9 пине ҫитнĕ, кинотеатăрсен, киноустановкăсен тата куҫса ҫӳрекен киносен шучĕ хăвăрт ӳсет. 1913 ҫулта хаҫатсем 2,7 мĕлйун екземпљар тухса тăнă, 1936 ҫулта 38 мĕлйуна ҫитнĕ. ССР Союзĕнче хаҫатсем 69 чĕлхепе, кĕнекесем ССР Союзĕнчи 111 халăх чĕлхипе тухаҫҫĕ.

Ҫĕршыври халăхăн ҫурри пулса тăракан хĕрарăма социалисăмла строй ирĕке кăларчĕ. Пĕтĕм халăх хуҫалăхĕнче ĕҫлекен хĕрарăмсем—работницăсем, служăщчисем 1926 ҫулта 8,5 мĕлйуна ҫитнĕ. Совет хĕрарăмне—ССР Союзĕн пĕртан правалă гражданинне халăх хуҫалăхĕн кирек хăш отраҫлисенче ĕҫлеме те ҫул уҫă. Партипе правителствă ача амăшĕсемпе ачасемшĕн питĕ хытă тăрăшаҫҫĕ, 1937 ҫулта 9 уйăх хушшинче нумай ачалă амăшĕсене 875 мĕлйун тенкĕ пособи панă.

Пирĕн ҫĕршыври социалисăмăн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ ҫĕнтерӳне епĕр социалисăмăн пур тăшманĕсене, шалтипе тулти тăшманĕсене хирĕҫ нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешнипе тунă. Фашисăмăн тарçисене—троцкисла бухаринла сăтăрҫăсене, диверсантсене, шпионсене, буржуалă националиссене—капиталисăм реставратăрĕсене ҫапса аркатнă. Пирĕн ҫĕршывра капиталиссемпе помещиксен влаҫне кайала ҫавăрма хăтланакан халăх тăшманĕсен йулашкисене нимĕн хĕрхенмесĕр тапăлтарнă, малашне те тапăлтаратпăр.

Ҫапăҫура пиҫнĕ Ленин—Сталин партийĕ, Сталин йулташ йертсе пынипе ССР Союзĕнчи халăхсем ҫĕнĕ ҫĕнтерӳсем патне пыраҫҫĕ.

Ҫак цифăрсемпе фактсем Совет граждăнĕсене, пирĕн телейлĕ ҫĕршыври мĕн пур ĕҫҫыннисене Аслă Совета суйлана вăхăтра вĕсем камшăн сасăлама кирли ҫинчен уҫăн та ĕнентерӳллĕн каласа пораҫҫĕ.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строительстви

Лини хывассине хăвăртлатмала

Чукунҫул линине хывакан бригадăсем нойабĕрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 15,4 километр ҫĕршшĕ лини хывса 86-мĕш километрти труба-патне ҫитрĕç. Анчах лини хывассин мирлĕ пек хăвăртлăхĕсемпе пырат, тесе сук-ха. Кашни кулен 3 километр ытла лини хывма май пулсан, халĕ 1 километра йăхăн ҫеç хываççĕ. Кунашках пулни строительствă руководительсен тĕлĕр сĕйолинчен килет. Йулашки икĕ-виçĕ кун хушшинче лини хывас ĕç тракторсем йусав мар пирки чарăнса тăнă. Тракторсене вăхăтра йусама пулмаст-и вара? Ытах кирлĕ пулсан, урăх участоксенчи тракторсене те ку ĕçе йăвăҫтарма май пулнă.

Ĕç вăйĕ ҫитмонни те пысăк чăрмав пурот. Лини хывнă ҫĕрте ĕçлеме комсомол Облкомĕ 1500 комсомолеца мобилизацилеме пулнă. Пайанхи куна ҫитсе те шу обйазательствăна вăл пурнăҫа кĕртмест. Лини хывнă ҫĕрте халĕ пĕтĕмпе те 161 ҫын ҫеç ĕҫлеççĕ.

Йулашки вăхăтра районсем ĕç вăйĕ тăратас тĕлĕшпе питех те сӳрĕк ĕҫлеме тытăнчĕç. Ку таранччен ҫĕрĕҫне тăвас плана пĕтĕмпех тултарса ҫитерме условисем пулнă пулин те, пайанхи куна 89.5 процент ҫеç тултарнă. Шăхасанпа Ҫĕмĕрле районĕсен айăпĕпе 81-мĕш километрти труба ҫине халĕ те тăпра тултарса ҫитермен. Ҫĕрпӳ районĕ пысăк ҫавал шывĕ урлă кĕпер тунă ҫĕрте ĕҫлеме ĕç вăйĕ ҫителĕклĕ тăратмаст.

Чукунҫула хăвăрах туса пĕтересине ҫак кунсенчи ĕҫсем татса параççĕ. Районри организацисен ҫакна асра тытса чукунҫул ҫинче ĕҫлеме ĕç вăйне йышлăн организацилемелле.

Колхозсенчи ударниксем чукунҫул строительствине тухаççĕ

Чукунҫул строительстви (хамăр корр.). Шăхасанпа Шăнкăртам районĕсенчи колхозсем, хăйсене пулăшас тĕлĕшпе тепĕр хут строительствăна ĕҫлеме тухаççĕ. Шăхасан районĕнчи „Ҫĕнĕ пурнăҫ“ колхозран 12 колхозник-ударниксем тухрĕç. Вĕсем халĕ колхозри пекех ударла ĕçлеççĕ. Колхозра 380 ĕҫкунĕ тунă Д. Волков йулташ чукунҫула туса пĕтеричченех стройкăра ĕҫлеме пулчĕ.

Шăнкăртам районĕнчи „Ударник“, „Марс“, Шăхасан районĕнчи Молотов йачĕпе тăракан колхозсем те строительствăна ĕç вăйĕ парса пулăшассипе хĕрӳллĕн ĕҫлеме тытăнчĕç.

Агитатăрсен курсĕ уҫăлчĕ

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строительствинчи 6-мĕш участкăра, нойабĕрĕн 11-мĕшĕнче, 5 кунлăх агитатăрсен курсĕ уҫăлчĕ. Курса 9 ҫын ҫӳрет. Вĕренме кĕнекесем, хут, кăрандашсем ҫителĕклĕ. Курсран вĕренсе тухакансем чукунҫул ҫинчи участкăсене „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ строительствăри рабочисене вĕрентме кайаççĕ.

П. Йаргуньҝин.

Трак вăтам шкулĕнче

Шкулта класс тулашĕнчи ĕҫе йĕркелесси—пысăк ыйту. Трак вăтам шкулĕнче вĕренекен ачасем ку тĕлĕшпе кăҫалхи вĕренӳ ҫулĕнче чылайах ҫитĕнӳсем турĕç. Хальхи вăхăтра кунта тĕрлĕрен массăлă кружоксем—драмă, хор, литературă тата авиамоделиссемпе фото ĕҫне йуратакансен кружокĕсем ĕçлеççĕ. Кашни вĕренекен мĕнле те пулин кружокра тăрат.

Драмă кружоке кăҫал Н. Мрањкан „Салуќ“, Кăлканăн „Анисса“ пйессисене лартрĕ. Кунсăр пуҫне, кружок „Айдар“ драмăна Йангас йалне кайса лартса пачĕ. Спектакăљсенче Кузнецов, П. Золотин, С. Арсентйев, В. Григорйев йулташсем уйрăмах лайăх выљаççĕ.

Г. Михайлов пуҫарса пыракан струнлă оркестр та хăйĕн пултарулăхне уҫăмлăн палăртса пырат. Оркестр час-часах ҫывăхри Именкасси, Карăк йалĕсене тухса, концертсем туса ирттерет.

Ҫамрăк авиамоделиссен кружокĕнче 20 ача тăрат. Кружок ĕҫне авиамоделис—пионер Н. Кустарников йеркелесе пырат. Ачасем кăҫал ҫĕнĕ моделсем, планерсем чылай тунă. Хăшпĕр моделсем 300—400 метра ҫити вĕçеççĕ.

Хор кружокĕ кăҫал ҫĕнĕрен „Марш веселых ребят“, „Песня о родине“, Песнь о Ворошилове“, „Песнь о Сталине“ йурăсене вĕренчĕ. Хорга пĕтĕмпе—50 ача. Ачасем музыкăна йуратса вĕренеççĕ. Шкулта хор пултарулă концертсем туса ирттерчĕ.

Ачасен массăлă кружокĕсене шкул дирекцийĕ куллен пулăшса пырат. Вĕренекенсен класс тулашĕнчи вăхăчĕ хаваслă та усăлă иртет.

А. Семенов.

Судоверфри рабочисен ӳсĕмĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Октăбĕрти Социалисăмла Аслă революци 20 ҫул тултарнине судоверф коллективĕ ҫитĕнӳсем тунипе, пысăк хаваслăхпа уйавласа ирттерчĕ. Уйав умĕнхи ăмăртура спирт завочĕпе ăмăртса ĕçлесе октăбĕр уйăх планне 145 процент тултарнă. Кăна стахановла йухăма вăйлатса пынипе тунă. Халĕ судоверфра 65 рабочи стахановецсен ретĕнче, 54 рабочи ударниксен ретĕнче тăраççĕ. Вĕсем пысăк та паха тĕслĕхсемпе ĕçлеççĕ.

Кашни цех, кашни рабочи пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлет. Ăмăртса ĕçленипе баржăсем тăвакан цехри мастер Шипунов октăбĕр планне 145 процент, платник-стахановецсем: Г. Сивов 156 процент, И. Будников 139 процент, Л Староверовпа М. Белов 175 процентшер тултарнă.

Тимĕрç цехĕ ăмăртса ĕçлеме пуҫланăранпа плана ăнăҫлăн тултарма пуҫларĕ. Ку цехри рабочисем Плешников йулташ нормăна 219 проц., Лебедев 199 процент тултарнă. Хăма ҫуракан заводри рабочисем: Г. Муравйова нормăна 131 процент, Уткин 200 процент тултарнă.

Судоверфри рабочисем нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче Аслă уйав йачĕпе пуху туса ирттерчĕç. Пирвайах ССР Союзĕ 20 ҫул хушшинче тунă ҫитĕнӳсем ҫинчен доклад итлерĕç. Унтан нумай рабочисем хăйсен ĕҫĕсем, пурнăҫĕсем ҫинчен каласа пачĕç. Хăма ҫуракан заводри Муравйова йулташ ҫапла каларĕ:

— Сĕнтĕрвăрринчи спирт завочĕ хуҫа аллинче пулнă вăхăтра рабочисем кувне 17—18 сехетшер ĕçлесе те тăранса пурăнмалăх ĕç укçи илеймен. Вăл вăхăтра пире час-часах хĕнеччĕç, штрафлаччĕç.

Халĕ пирĕн ҫĕршывра ҫынна ҫын пусмăрласси ҫук. Епĕр халĕ пуйан та культурăлă пурнăҫпа пурăнатпăр. Ҫавăн пек пурăнма пирĕн пур правасем те пур.

Муравйовă хыҫҫăн тата та нумай рабочисем тухса каларĕç. Тухса калакансем кашнийех стахановла ĕçлесе Аслă Совета суйламали кун тĕлне декабĕрĕн 12-мĕшне партăсем тăвас ҫулталăкри плана тултарма сăмах пачĕç.

В. Василйев.

Платоновсем вăрман хуҫалăхне салатаççĕ

Турханти вăрман хуҫалăхĕн Мăрат участокĕнче ҫемйелĕх хытă сарăлнă. Унта пур участкăсенче те пĕр тăвансем ĕçлеççĕ. А. Платонов счетовод пулса ĕçлет. Унăн аслă пиччĕшĕ обйездчик, тепĕр пиччĕшĕ вăрманпункт начальникĕ пулса ĕçлет. Хăйсен ĕçне кирлĕ пек туса пырсан пĕр тăвансем ĕçлени те нимех те мар пек туйăнат. Анчах кунти платоновсем киревсĕр ĕçсем туса пыраççĕ. Вĕсем вăрманта ĕçлекен рабочисене йаланах вăрҫса, йатласа ҫӳреççĕ, улталаççĕ.

Акă фактсем: Ҫĕнĕ Мăратра пурăнакан Н. Василйев йулташа деньгисем уйăрнă ҫĕрте ĕçлеме куллен 5-шер тенкĕ паратпăр, тесе илнĕ. Кайран 4-шер тенкĕ ҫеç тӳленĕ. Ҫав вăхăтрах квитанци ҫине 5-шер тенкĕ ҫырса ытлашши укçине хăйсен кĕсйине чикнĕ.

Ку ҫеç те мар-ха, платоновсем вăрман хуҫалăхне салатаççĕ. Вĕсем Чурачăк йалпо пуҫлăхне Хуранова хăйсене лайăх таварсем панăшăн 19-мĕш квартăлта пĕр гектар ҫинче тырă акма ирĕк панă. Ҫавнашкалах Тимĕрҫкассинчи Плешкова лайăх шкаф туса панăшăн ҫур гектар ҫĕр панă.

Платоновсем кулак пулнă Герасимовпа пĕрле утар тытса ăна пытарса усраççĕ. 17-мĕш квартăлта Турхан районĕнчи Шăхач йал ҫынни Горйачев кулака пичкесем кăшăл ҫаптарса усраççĕ. Хăйсем ун патне час-часах ĕçкĕ-ҫикĕне ҫӳреççĕ.

Платоновсен ирсĕр ĕçĕсем ҫинчен калакан фактсем темĕн чухлех илсе кăтартма пулат. Анчах вĕсем пĕр-пĕрин ирсĕр ĕçне пытарса пырса ку таранччен вăрман хуҫалăхĕнче ĕçлеççĕ.

Л. М.

Ӳкерчĕк ҫинче: Л. М Каганович салтаксен митингĕнче сăмах калани. Б. Владимирски художник ӳкерчĕкĕ. (Пичете пама хатĕрленĕ „ССР Союзĕнчи граждан вăрçи историн“ II-мĕш томĕнчен) (Союзфото).

Урамри комитетсен стена хаҫачĕсем

Шупашкар хулинче кашни урамра тенĕ пекех стена хаҫачĕсем ҫакăнса тăраççĕ. Вăл хаҫатсем урам комитечĕсем сумĕнче тухаççĕ. Анчах пур хаҫатсене те йĕркелĕ тата тирпейлĕ кăларас тĕлĕшпе урам комитечĕсем ҫителĕклĕ ĕçлемеççĕ-ха.

Кадыков йачĕпе тăракан урамра „Активистка“ стена хаҫачĕ тухат. Хаҫатри материалсене вулана хыҫҫăн, йулашки номĕр Октăбĕр уйавĕ тĕлне тухнă темеле. Анчах хаҫат хăш числара тата миҫемĕш №-пе тухнине ҫырман. Ҫак пĕчĕк кăлтăксемех вулакансен куҫне чăн малтан курăнса кайаççĕ. Хаҫатне тĕплĕ вуласа пăхсан, кунта пысăк ҫитменлĕхсемех пурри курăнат.

Хаҫатăн умстатйине Октăбĕр революци 20 ҫул тултарни ҫинчен ҫырнă. Анчах статйара Совет Союзĕнче 20 ҫул хушшинче тунă ҫитĕнӳсене нимĕн те кăтартман. Тата „Чăваш республикĕ лайăх сулйĕрсемпе хăйĕн питне улăштарчĕ“,—тесе ҫырса, пирĕн тăван республикăн промышленнăҫри, йалхуҫалăхĕнчи, культурă фронтĕнчи ҫитĕнӳсем ҫинчен нимĕн те асăнмасăр сиккипе чупса иртсе кайнă.

Хаҫатра хальхи вăхăтра иртекен Союз Совечĕпе Национальнăҫсен Советне суйлас кампани ҫинчен пĕр статйа ҫеç пур, ун ҫинчен умстатйара та нимĕн те ҫырман. Паллах ҫак тĕслĕхсем хаҫат пурнăҫран йулса пынипе, вулакансене пайанхи кун интереслентерекен ыйтусене ҫутатса парайманнине кăтартаççĕ.

Тата суйлав саккунне вĕренесси мĕнле пыни ҫинчен ҫырнă статйара кружокра лайăх вĕренекенсене кăтартса пынă, унпа пĕрле кружок занйатийĕсене ҫӳремен килхуҫи арăмĕсене хăтарса тăнă. Анчах кружок руководителĕсем килхуҫи арăмĕсене кружока ҫӳретес тĕлĕшпе мĕн те пулин тунă-и, туман-и, ҫавна тишкĕрмен.

Ҫавăн пекех Ленин урамĕнче тухакан „За культуру“ хаҫатра та ҫитменлĕхсем пур. Анчах ку хаҫатăн умстатйине тĕплĕрех ҫырнă темеле. Статйара Октăбĕр революцийĕнчи пусмăрлă пурнăҫ, тата революци тунăранпа 20 ҫул хушшинче тунă ҫитĕнӳсем ҫинчен кĕскен те ăнланмала каласа панă, тата статйана Аслă Совета суйлас кампанипе ҫыхăнтарнă.

Ку хаҫатăн тĕп ҫитменлĕхĕ вăл массăсенчен татăлса ĕçлени пулат. Хаҫата Октăбĕр уйавĕ йачĕпе кăларнă пулсан та, мĕн пурĕ те 3 статйа ҫеç кĕртнĕ. Вăхăт ҫук тесе пур редколлеги членĕсем хаҫат кăларас ĕҫре лайăх хутшăнса ĕçлемен. Пĕр Шчитова ҫеç хаҫата вăхăтра кăларассишĕн тăрăшса ĕçлет. Урамри комитет та стена хаҫатне йĕркелĕ кăларас ĕҫре нимĕн те пулăшмаст.

Премисем пачĕç

Канашри Сталин йачĕпе тăракан ертелре ĕҫлекенсем суйлав умĕнхи ăмăртува анлăн сарса йачĕç. Уйрăм стахановецсем ăмăртува хутшăнса тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă, Семенов Василий—аслă механик, хăйĕн нормине 200 проц. тултарса пырат. Аслă Октăбĕр революцийĕ 20 ҫул тултарвă йатпа ăна промертел 500 тенкĕ премии пачĕ.

Афанасйев В. вăрман касас ĕҫре 8 ҫул ĕçлет, 7 хутчен премии илнĕ. Тăрăшса ĕçленешĕн промертел ăна 100 тенкĕ укҫа парса парнелерĕ.

Н. Пахомов Сиккассинчи ертелре пичке тăват, вăл плана 200 процент тултарса пырат. Ҫавăн пек лайăх ĕçлесе пынăшăн Пахомова ертел 100 тенкĕ премии пачĕ. Ҫаввашкалах Фролов, Петров, Самушкин, Жульков, Гаврилов йулташсене 1 0-шер тенкĕ тата Федотовăна 50 тенкĕ укҫан парса парнелерĕç.

Промертелре Сиккассинчи участкă мала тухрĕ. Вăл участкă иртнĕ уйăхри плана 125 процент тултарнă. Ку участкăна промертел кусса ҫӳрекен хĕрлĕ йальв тата производствă пуҫлăхне Аҫтаков йулташа 100 тенкĕ укҫа пачĕç. Ертел хорне йертсе пыракан Мурзукова 100 тенкĕпе премилерĕç.

Ив. Малов.

Пасарта продуктăсем нумай

Иртнĕ тунтикун, нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче, Шупашкарти пасар уйрăмах вăйлă пулчĕ. Пасара ҫимĕç продуктисем нумай илсе тухнă. Тавар сутмали сĕтелсем ҫинче пĕр пушă вырăн та йулман, йăлтах колхозницăсемпе тулса ларнă. Унта сĕт, тăварланă купăста, хăйар, кăмпа, йаваçулми, помидор, ҫăмарта, ҫу, măйар сутаççĕ. Ҫăмарта хакĕ теҫеткии 3 тенкĕ те 50 пус—4 тенкĕ, килограм ҫу 15 тенкĕ.

Колхозсем кăҫал калама ҫук вăйлă тырпул тата питĕ нумай пахча-ҫимĕç туса илчĕç. Государствă умĕнчи обйазательствăсене парса татнă колхозниксем ытлашши ҫимĕç продуктисене пасара илсе тухаççĕ. Иртнĕ пасарта тырпул, ҫĕрулми, йаваçулми, купăста сутма 200 лава йахăн тухнă. Ҫăнăх та пур.

Ҫавăн пекех пасарта тĕрлĕрен какайсем те нумай пулчĕç. Какай хакĕ—килограм 6 тенкĕрен пуҫласа 9 тенке ҫитиччен.

Колхоз клубĕ

ЙĔПРЕҪ. Пĕчĕк Упакассинчи колхоз пĕлтĕр илемлĕ те пысăк клуб туса лартрĕ. Клуб пуҫлăхĕ П. Тимофейев йулташ лайăх тăрăшнă пирки клуб районта чи лайăх ĕçлекенсен шутĕнче тăрат.

Клубра тĕрлĕрен кружоксем организациленĕ. Музыкă кружокĕнче купăс, кĕсле, скрипкă, гитарă, 5 балалайкă, мандолинă, барабан, трензел пур. Кружока колхозниксем нумайăн ҫӳреççĕ. Акă 60 ҫулхи Н. Романов колхозник кĕслепе выљат. Кружок руководителĕ С. Йеразумов тата П. Йуманов йулташсем пур инструментсемпе те питĕ лайăх выљама вĕренсе ҫитрĕç. Аслă Октăбĕр праҫникĕнче вĕсем концерт пачĕç. Праҫник ирттерме вечăра пынă колхозниксене пуринчен ытла „Ҫĕршыв йурри“, „Конармейское“ йурăсем кăмăла кайнă.

Драмкружок кăҫал 6 хутчен спектакль лартса пачĕ.

Клубра „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ вĕренмели кружок ĕçлерĕ. Мĕн пурĕ 34 хут занйати туса ирттернĕ. Час-часах радиопа тĕрлĕрен лекцисем итленĕ.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали кун. Клуб суйлава хатĕрленме тытăннă. Клубра сасăламали 6 пӳлĕм тунă. Пĕр вăхăтрах 6 суйлавçă кĕрсе бӳллетенсем тултарма пултарат.

Клубра суйлав кун столовăй, буфет ĕçлет.

Нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлавçăсен спискисене кăларса ҫакрĕç.

Г. Марушев.

Шупашкарти ҫамрăк моделиссем.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Семсĕр леçник

Канаш вăрман хуҫалăхĕн Кĕлĕмкасси ҫывахĕнчи (Йĕпреç р.) вăрманĕнче леçник пулса Н. Йефимов ĕçлет. Вăл государствă пурлăхне ҫирĕп сыхлас вырăнне ăна салатма пулăшат. Вăрман вăрласа касакансем патĕнче ĕҫкĕ-ҫикĕре ҫӳрет. Вĕсенчен вçаткăсем илет.

Кĕлĕмкассинчи ĕлĕк кулак пулнă А. Кириллов патне ĕҫкĕ ҫикĕне ҫӳрет. Пĕлĕшĕсене вăрманти çăкасене пушăт тума касма ирĕк панă. Ку ҫеç те мар-ха. Йефимов совет саккунĕсене пăсат. Вăл ҫынсене хĕнет. Нумай пулмаст Кĕлĕмкассинчи Лазарева вĕренекене тата Алжихова йалĕнчи Кузьмин колхознике хĕненĕ.

Йефимов леçник пулса ĕçлеме тивĕçлĕ ҫын мар. Ăна халех ответ тыттармала.

Д.

Колхозниксен килĕсене електричествă ҫутатат

ОДЕССА, 15-XI (ТАСС). Октăбĕрти Социалисăмла Аслă революци ҫирĕм ҫул тултарнине уйавлана кунсенче Одесса тата Николайев облаҫĕнчи нумай колхозниксен килĕсене Илйич лампăчкисем ҫутатма пуçланă. Кунта колхозниксен килĕсене ҫĕнĕрен кĕртнĕ лампăчкăсем пиншерĕн шутланаççĕ

Николайев облаҫĕнче 35 пин вольт вăйлă електричествă линисем туса пĕтернĕ. Ҫавăн пекех вунă пин вольт вăйлă 31 километр тăршшĕ електролинци те туса пĕтернĕ. Ҫак линисем Снегирев тата Калининдорф районĕсенче колхозниксен килĕсене 3.500 лампăчкă кĕртме май панă.

Одесса облаҫĕнчи Вознесенск районĕнче пысăк вольтлă 12 километр тăршшĕ лини туса пĕтернĕ. Ҫав лини „Путь Ленина“, „Прогресс“, „Коминтерн“ тата Киров йачĕпе тăракан колхозсене електричествă вăйĕ панă. Одесса облаҫĕнчи Ново-Архангельск районĕнче гидроелектростанци туса лартнă.

Калининри текстильщиксем хăйсен кандидачĕшĕн агитацилеççĕ

КАЛИНИН, нойабĕрĕн 15-мĕш (ТАСС). Калинин йачĕпе тăракан арлакан фабрик текстильщикĕсем, Союз Советне депутата суйлама хăйсен йатлă работницине А. А. Шавалевăна тăратнăскерсем, суйлавçăсем хушшинче суйлав умĕнхи агитаци тума пуçланă. Темиçе кун кайала А. А. Шавалевăна округри суйлав комиçси регистрациленĕ тата Калинин хула суйлав округĕ тăрăх сасăлама суйлав бӳллетенĕ ҫине кĕртнĕ.

Шавалева йулташ кандидатуришĕн Калинин хулинчи темиçе пин текстильщик пурăнакан Первомайски поçолкинчи суйлав участкинче уйрăмăнах активлă агитацилеççĕ. Кунта агитатăрта ĕçлеме арлакан фабрикăн вăтăр вата рабочине йанă. Вĕсем пурте ĕлĕк хутла пĕлмен работницă пулнă, халĕ Союзри пысăк фабриксенчен пĕрин директăрĕн заместителĕ таран ӳснĕ Аксинийа Андрейевна Шавалевăна лайăх пĕлеççĕ.

Фабрик агитатăрĕсем доверенăйсемпе тата парторгсемпе пĕрле поçолкăри рабочисен килĕсенче Шавалева йулташ ҫинчен калаçусем туса ирттереççĕ, вăл сквозной стахановла бригадăра бригадир пулса ĕçлени ҫинчен, вăл культурăпа политикă тĕлĕшпе ӳсни ҫинчен т. ыт. те каласа параççĕ. Поçолкăра Шавалева йулташăн портречĕсемпе автобиографисене ҫакнă.

Германире республикалă Испанийе пулăшма укҫа пуҫтараççĕ

ПАРИЖ, 14-XI (ТАСС). Еспань агентстви Германирен, Германире республикăлă Испанипе пĕр шухăшлă пулса выступленисем туни ҫинчен пĕлтерет. Сапла, Кельн хулинче Испани халăхне пулăшма вăрттăн укҫа пуҫтараççĕ. Ҫавăн пек укҫа пуҫтарас ĕҫе хутшăннисен хисепĕнче, рабочисемсĕр пуҫне, халăхăн ытти сийĕсенчен те представителсем пур. Полици 70 ҫынна арестленĕ.

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем

Агрессорсен вăрҫăлă союзĕ

Нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче Итали столицинче—Рим хулинче—Итали „коммунисăмпа кĕрешмели“ догăвăр ҫумне хутшăнни ҫинчен протокола ал пуснă. Ҫав „коммунисăмпа кĕрешмели“ догăвăр тенĕскерне 1936 ҫулхи нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче Йапонипе Германи тунă. „Коммунисăмпа кĕрешмели“ тени — вăл, паллах ĕнтĕ, фашисла державăсен агрессилĕ планĕсене витсе тăмали мĕскĕн пӳркенчĕк ҫеç пулса тăрат. Ҫав догăвăр Германипе Йапони тата Итали тунă вăрҫăлă союз пулса тăнине, ҫав вăрҫăлă союза вĕсем—тĕнчене ҫĕнĕрен империалисла валеçме, йут территорисене туртса илме, ҫĕнĕрен тĕнче вăрҫине хатĕрлеме тунине пурте пĕлеççĕ.

Германи фашисĕсем тата Йапонири фашисла войенщчинă Совет Союзĕн територийĕ ҫине сĕмсĕрленсе тапăнма тахҫанах хатĕрленнине пурте пĕлсе тăраççĕ. Ҫав виçĕ агрессорăн планĕнче тата Хĕвельанăç Йевропăри демократилĕ государствăсем ҫине те—чи малтан Англи тата Франци ҫине тапăнма палăртса хунă.

Германипе Итали иккĕмĕш ҫул ĕнтĕ Испанире вăра-хурахла вăрçă вăрçаççĕ. Вĕсем Испанийе хăйсен аллине тытса илсе, Английе тата Францийе тапăнма базă туса хурасшăн.

Германи, Йапони тата Итали колонисене ҫĕнĕрен валеçме ыйтнине пурте пĕлеççĕ. Тĕнчери чи шултра колонилĕ державăсем — Англи тата Франци. Итали Абиссинийе тытса илнĕ ĕнтĕ. Вăл Ҫурçĕр Африкăра тата Хĕвелтухăçĕнчи арабсем пурăнакан ҫĕршывсенче Английе хирĕçле политикă тытса пырат. Унта Англин чи пысăк колонийĕсем—Йегипет, Палестина, Аравийа. Фашисла Германи Африкăри ĕлĕк Германин пулнă колонисене тавăрса пама ыйтат, а ҫав колонисем халь Англи аллинче. Йапони Англи капиталне Ҫурçĕр Китайран хĕссе кăларса пырат.

Тĕнчери пичет (Англипе Францири пичет те) виçĕ агрессорсен—Италин, Германин тата Йапонин блокĕ ССР Союзне хирĕç ҫеç мар, пуринчен ытла Английе тата Францийе хирĕç пырат, тесе ҫырат. Пичет тата — фашисла державăсем ытти хăшпĕр государствăсене, уйрăмăн илсен Польшăна, Австрийе тата Венгрийе вăрҫăлă союза хутшăнтарма тăрăшаççĕ, ҫавна тума вĕсем малашне те тăрăшĕç, тесе ҫырат.

Вăрçă вутне чĕртекен фашиссем каварлашнине кура Совет Союзĕ хăйне вальли кирлĕ вывăдсене тăвĕ.

ССР Союзĕ хăйĕн мирлĕ политикине ҫирĕп тытса пырат. Вăл мире коллективлă хӳтлессишĕн тăрат, тата — тĕнче валеçĕнмеле мар, тет. Ҫак принципсене халĕ нихҫанхинчен те ытларах сыхламала тата ҫирĕплетсе пымала, мĕншĕн тесен вĕсем мирлĕ саманана сыхласа тăма май параççĕ.

Анчах иртĕнсе кайнă фашисла агрессорсем совет ҫĕршывĕ ҫине килсе тăрăнма, пирĕн ҫĕре пĕр вершук та пулин туртса илес тесе тĕкĕнме хăйсан, вĕсене аркатса тăкма Совет Союзĕн ҫителĕклех вăй пур. Агрессилĕ государствăсем ССР Союзĕ тĕлĕшĕпе тăшманла политикă тытса пыни—фашисла государствăсемшĕн хăйсемшĕнех йăвăр пулĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Китай љотчикĕсем Хуан-Гуаљ-хан (сылтăмра) тата Мао-Ин-цу. Вĕсем Ханчжоу районĕнче Йапони икĕ бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

(Союзфото).

Брюсселри конференци Йапонин агрессилĕ ĕçĕсене сивленĕ

Нойаберĕн виççĕмĕшĕнче Белљги столицинче—Брюсселре—1922 çулта Вашингтонра (Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен столици) Китайăн территорине никам та текĕнмелĕ мар тесе гарантилекен договор тунă государствăсен конференцийĕ уçăлнă. Конференцийĕ Йапони Китай çине çĕнĕрен тапăннă пирки пухнă.

Конференцийĕ Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем, Белљги, Китай, Франци, Португали, Голланди, Итали, Англи хутшăннă.

Вашингтонри договора ал пуснă тăххăрĕмĕш державă—Йапони—конференцийĕ хутшăнма килĕшмен, Брюсселе хăйĕн представителĕне йама чĕннине вăл йышăнман.

Совет делегацийĕн членĕ—ССР Союзĕн йутçĕршыв ĕçĕсен халăх комиссарĕн заместителĕ Потомкин йулташ нойаберĕн 13 мĕшĕнче конференцире сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: „Конференци Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи вăрçăна вăрçакан йенсене килĕштерсе чарма тăрăшни пĕтĕмпех анаçсăр пулчĕ. Çапла пулин те пĕсĕ мире каллех мир туса хурас шанчăка парахма сăлтавсем çук". Потомкин йулташ çакăн çине кăтартса панă: совет делегацийĕ ĕненнĕ тăрăх, Китайпа Йапони хушшинчи конфликта, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче мир пултăр текен державăсем пĕр шухăшлă пулса кирлĕ ĕççене чăннипех туссăн, тĕрĕслĕх никĕсĕ çинче тата вăйри договорсене пăхăнса чарса хума пулать. Ку тĕлĕшпе кирек мĕнле татăклă пуçару ват,—тенĕ Потомкин йулташ,—Совет Союзĕ пулăшать.

Нойаберĕн 15-мĕшĕнче конференци нумайрах сасăпа, Итали делегачĕ хирĕç сасăланă,—Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен, Францин тата Англин делегацийĕсен йачĕпе сĕннĕ декларацие (официаллă заявлени) йышăннă.

Йапони—Китайпа Йапони хушшинчи конфликт вăл çав çĕршывсене çеç интереслентерекенскер пулать, теме хăтланать. Конференци йышăннă декларацире çавăн пек хăтланнине хирĕç сивĕччĕн отпор панă. Декларацире—Китайпа Йапони хушшинчи конфликт Вашингтонри договора ала пуснă, пĕтĕм тĕнчери мире сыхлассишĕн тăракан пур çĕршывсене те саккунлă интереслентерет, тенĕ.

Декларацире тата—Йапони Китайра агрессилĕ ĕçсем туни тăххăр державă Вашингтонра тунă договора тата 1928 çулта ала пуснă, Бриан-Келлог пакчĕ текен, вăрçă нацилĕ политика орудийĕ пулса тăнине сивлекен, пĕтĕм тĕнчери килĕшӳве те (ку килĕшӳ çумне 60 государствăна йахăн хутшăнна) хирĕç пырать, тесе палăртсах каланă.

Конференци нойаберĕн 22-мĕшĕччен ĕçлеме чарăннă.

(ТАСС).

Германире правапа ирĕклĕхе хӳтлес ыйтупа Йевропăри конференци уçăлнă

ПАРИЖ, 14-XI (ТАСС). Ĕнер Париж хулинче Германире правапа ирĕклĕхе хӳтлес ыйтуна Йевропăри конференци уçăлнă. Конференцийĕ Тељман йулташа ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет пухнă. Конференци президиумĕнче профессор Валлон, Францири коммунисла партин Тĕп Комитет членĕ Марсељ Кашен тата ыттисем те.

Марсел Кашен конференцире пысăк та тĕплĕ сăмах каланă. Вăл — фашисăмăн агрессилĕхне тата Германири фашиссен хăрушла тискерлĕхĕне пусмăрне кăтартса панă. Германире,—тенĕ Кашен,—фашиссем Германи халăхне пусмăрлаççĕ, фашиссем Германи халăхĕнчен правасемпе ирĕклĕхе туртса илнĕ. Германири фашиссем урăхçĕршывсенче терорла актсем тата тапанусем организацилеççĕ. Вĕсем ĕнтĕ республикăлă Испанипе вăрçаççĕ тата çĕнĕрен тĕнче вăрçи хатĕрлеççĕ. Германири фашисăма хирĕç тăракан çынсен паттăр кĕрешĕвĕ çинчен тата фашисăм тĕрмисемпе концентрацилĕ лагĕрсене тытса хунă çынсем асап курни çинчен каласа, Кашен йулташ пĕтĕм тĕнчери ĕççынниcене пурне те фашисăмăн тискерлĕхне хирĕç протест кампанине вăйлăн туса пыма чĕннĕ. Германире хăйĕнче те фашисăма хирĕç йухăм ӳсе пырать, вăл пулать те ĕнтĕ чăн-чăн Германи, çав йухăма пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем пур майпа та пулăшас пулать, тенĕ Марсел Кашен.

Францири паллă адвокат Моро Джиафери конференцире тухса каланă сăмахĕнче фашисла судопроизводствă çинчен чарăнса тăрса, Германире политикăла ĕçсемшĕн хупса лартнисене нимĕнле правасăр хăварни тата хытă хĕсĕрлени çинчен каланă. Моро Джиафферк Тељман ĕçĕ çинчен уйрăмах чарăнса тăнă, Тељмана халиччен те суд туман-ха, тенĕ вăл. Тељмана суд тума хатĕрленнисем, халĕ ĕнтĕ ăна суд тума хăйаймаççĕ, тенĕ Моро Джиафферн. Фашиссем пилĕк çул хушши ĕнтĕ Тељмăна суд тумасăрах тĕрмере тытаççĕ, мĕншĕн тесен фашиссем Тељмăна суд тусан, суд умĕнче — айăпланакан мар, а, Димитров пек, айăплакан пулса тăрасран хăраççĕ.

ХРОНИКĂ

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Г. Д. Данилова Чăваш АССР Аслă Сучĕн членĕсен составĕнчен кăларнă.

Райĕçтăвкомсен çĕнĕ председателĕсем

Антип Трифонович Калинин йулташа Тутаркас райĕçтăвком председателне суйласа лартнă.

Ĕçрен кăларнă И. Г. Куципина вырăнне—Куславкка райĕçтăвком председателне Абрам Степанович Степанов йулташа суйласа лартнă.

Ĕçрен кăларнă С. И. Иванов вырăнне—Турхан райĕçтăвком председателне Иван Ларионович Ларионов йулташа суйласа лартнă.

Пирĕн тăван çĕршывăн мухтавлă патриочĕсем — ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем

Пирĕн тăван çĕршывăн мухтавлă патриочĕсене, социалисăмшăн, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн тӳрĕ кĕрешекен борецсене ССР Союзĕн мелйуншер ĕççыннисем ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртнă.

Тăратнă кандидатсене пур çĕрте те регистрацилесе пĕтерне.

Ворошилов суйлав округĕнчи (Донецк облаçĕ) Союз Советне суйлассипе ĕçлекен суйлав комиççи Союз Советне депутата суйлама кандидата стахановла йухăма пуçаракана, орденоносеца, халĕ Л. М. Каганович йачĕпе тăракан Промакадеми студенчĕ Алексей Григорйевич Стаханов йулташа регистрациленĕ. Стаханов йулташ кандидатурине 10 номĕрлĕ шахтă, Ворошилов йачĕпе тăракан завод, Косиор йачĕпе тăракан завод, Сталин йачĕпе тăракан шахтă, „Донбассантрацитăн" 6 номĕрлĕ шахтă рабочисем, служăщчисен, инженерла техникла работниксен, Петровски йалсоветĕнчи 2 номĕрлĕ колхоз, Тељман йачĕпе тăракан колхоз членĕсен т. ыт. пухӳвĕсенче тăратнă. Вăл пухусенче пĕтĕмпе çĕр пин çын пулнă.

Союз Советне депутата суйлама йулашки кунсенче регистрациленĕ кандидатсем хушшинче:

Кузнецкри Сталин йачĕпе тăракан металлурги завочĕн директăрĕ К. И. Бутенко йулташ (Новосибирск облаçĕнчи Сталин суйлав округĕ). Чељабинскри трактор завочĕн рабочи-стахановецĕ К. И. Айкашев йулташ (Чељабинск йал суйлав округĕ); Мариупољри Илйич йачĕпе тăракан металлурги заводĕнче стахановла йухăма пуçаракан, 6 номĕрлĕ листопрокат цехĕн мастăрĕ Л. Т. Мирошниченко йулташ (Донецк облаçĕнчи Мариупољ суйлав округĕ); ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ заместителĕ, ССР Союзĕн Госплан председателĕ В. И. Межлаук йулташ (Башкир АССР-чи Уфа хула суйлав округĕ); писател А. Йе. Корнейчук йулташ (Кийев облаçĕнчи Звенигородский суйлав округĕ); Ашхабад тепловоз депо машинисĕ стахановец-орденоносец Мурад Чулетов йулташ (Туркмен ССР-чи Марикий суйлав округĕ).

Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ:

Совет Союзĕн Геройĕ љотчик-испытатељ Г. Ф Байдуков йулташ (Дагестан ССР-чи Ботлих суйлав округĕ); Киров йачĕпе тăракан совхозăн (Казахстан) ĕнесем сăвакан орденоноскă Салиха Онгарбайева йулташ (Алма-Ата йал суйлав округĕ); Куйбышеври карбурат завочĕн ĕçхатĕрĕсем тăвакан цех начальникĕ инженер Ф. А. Коваленко йулташ (РСФСР-чи Куйбышев суйлав округĕ); паллă орденоносец-стахановец В. С. Мусинский йулташ (РСФСР-чи Çурçĕр суйлав округĕ).

(ТАСС).

Çине тăрса вĕрентетпĕр

Елĕр, Сĕнтĕрвăрри чи Вăрманĕç техникумĕнчи студентсем, „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине" çине тăрса вĕренетпĕр. 5 заљати пулса иртрĕ. Пурĕ 19 кружокра 380 студент вĕренет. Долгополов круж кĕнче вĕренекенсем лекци хыççăн тĕрлĕрен ыйтусем параççĕ. Долгополов йулташ хăшпĕр йавăртрах ыйтусене çырса илсе, тепĕр заљатинче ответлеме хатĕрленсе пырать. Çапла пĕр ыйту та ответсĕр йулмасть. Кружоксем кашнийех пĕрпĕринпе ăмăртăва тухнă. Сторожсем хушшинче те суйлав Положенине аван вĕренеççĕ. Пуринчен ытла техничкăсем хушшинче Антонов йулташ тăрăшса ĕçлет.

Суйлав пирки тĕрлĕрен ыйтусем йача техникумра йатарласа йешчĕк тунă. Çавăнтах стена çинче вăл ыйтусене ответ пама хăма çапса хунă.

Н. Архипов.

Суйлав кунĕ валљи

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Траљкасси йалсовечĕ суйлав кунне хатĕрленес ĕçе хастарлăн тытăнчĕ. Суйлавçăсем валљи ручкă-карандаш хатĕрленĕ. Каçпа çутма 20 лампă илсе хунă.

Суйлав кунĕсенче урамсене, суйламали çурта илемлетме йалавçем çителĕклĕ. Плакатсем çырма уйрăм çынсем уйарнă. Суйлав кунĕнче урам хушшинче, колхозниксен килĕнче хĕрлĕ йал авсе, урамсенче ССР Союзĕн Асă Советне суйлама кайма чĕнекен плакатсем нумай пулаççĕ.

Хаљхи вăхăтра йалсовечĕ, колхозсем, вулав çурчĕ, комсомăл организацийĕ, шкулсем, уйрăм колхозник-активиссем суйлав кунне хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Мих. Бељаковский

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Чăтма çук ирсĕрлĕх"

Ку заметкăра Фомин Петр йалкор Тутаркас районĕнчи „КИМ" колхозра колхоз хуçалăхне сăтăр туни тата йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсса ĕçлени çинчен кăтартса çырнăччĕ.

Заметкăна тĕрĕслеме Тутаркас районĕн прокурорĕ патне йанă. Прокурор вăл заметкă пирки „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине çапла пĕлтерчĕ: „Заметкăна тĕрĕслесе тухнă хыççăн, заметкăри фактсем тĕрĕс пулчĕç. Фомин Прокопин ĕçне пăхса тухма Тутаркас районĕнчи халăх судне панăччĕ. Халăх сучĕ нойаберĕн 2-мĕш кунĕнче ĕçе пăхса тухнă хыççăн, Фомин Прокопине 1 çул хушши ирĕксĕр ĕçлемелле пригăвăр йышăннă".

„Хулигансене ответ тыттармала

П. йалкор Пĕремĕш Туçари (Вăрмар р-нĕ) Степановпа Филиппов йал хушшинче хулиганла ĕçсем туса пурăнни, йалти çынсене нимĕн айăпсăрах хĕнесе çӳренисем çинчен çырнăччĕ.

Ку заметкăна „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакци тĕрĕслеме Вăрмар районĕнчи милици тытăмне йанăччĕ. Заметкăра çырнисем тĕрĕс пулнă. Степановпа Филиппов хулигансене УК 74-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă.

„Колхоз пурлăхĕ—никам тĕкĕнмеле мар пурлăх"

„Харитоновка" колхозра (Çĕрпӳ р.) йалхуçалăх ертелĕн уставне пăхăнмаççĕ. Иртнĕ çуркунне Семенов Степанпа Кирилов Игнатий колхозниксем хăйсен ирĕкĕпе колхоз çĕрĕ çине хăйсене валљи 0,5 гектар тырă акса илсе усă курчĕç. Колхозниксем Семенов Степана хирĕç сăмах чĕнсен „сире пурĕ пĕрех лектеретĕп" тесе хăратать. Семенов Степанпа Кирилов Игнатий колхозри руководствăна хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Вĕсем колхоз председателне—Кузьмина икĕ хутчен хĕнеме тăнă. Семенов Степан 1936 çулта колхозăн пĕр лашине йурăхсăра кăларчĕ, лашине пуссан ашĕпе хăй усă курнă. Унăн айăпĕпех фермăра 14 пуç сысна çури вилнĕ. Коњухра ĕçленĕ чухне выљăх апатне вăрласа пурăннă. „Ударница" йатлă тыхана кӳлсен, вăл ăна хĕпхĕрлĕ йун пулаччен хĕнесе пĕтернĕ, тесе çырса пĕлтернĕччĕ пире.

Кун пирки Çĕрпӳ районĕнчи çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Илйин йулташ çапла пĕлтерчĕ: „Заметкăра çырнисем пĕтĕмĕшпех тĕрĕс. Айăплисене ответ тыттарма тĕрĕслӳ актине районри прокурора панă".

Алехин—Ейве шахмăт матчĕ

Амстердамран (Голланди) пĕлтернĕ тăрăх, нойаберĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчере малти вырăна тухассипе пыракан Алехинпа Ейвă хушшинчи шахмăт матчĕн хĕрĕх ход хыççăн тепĕр вăхăта куçарнă вунçиччĕмĕш партине выљаса пĕтернĕ. Алехин партине панă.

Вунçиччĕмĕш парти хыççăн матч $9^1/_2 : 7^1/_2$ шутпа Алехин çĕнтернипе малала тăсалать.

(ТАСС).

Шупашкарти государствă банкĕн çĕнĕ çурчĕ. Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

ТЕМТЕПĔР

Кăсйене чиксе çӳремели скрипкă

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатра пĕр скрипач хуçлатмали скрипкă тунă. Тăрăш унăн стандартлă скрипкă тăршшех, анчах сарлакăшĕ ансăртарах. Сасси унăн питĕ çемçен тухать, çавăнпа та унпа çулçӳренĕ чух çынсене чăрмантармасăрах выљама пулать.

Хуçлатса пĕр çĕре пуçтарсан çав скрипкă паљто йе пинжак кăсйине те вырнаçать.

(„Наука и техника").

Искусственнăй çутăра

Паллă светотехник Самуељ Гиббен нуÇавна тусан етем çутçанталăка хăйне киртернĕ, вăл хăй патне хăнасем чĕннĕ, хăнасем валљи апат чи лайăх повăрсене хатĕрлеттернĕ, анчах çутатасса ахаљ лампăпа мар, фиљтр витĕр кăларса симĕс тата хĕрлĕ çутăсемпе çеç çутатнă. Çакнашкал çутăра аш, пулăтатăкĕсем шупкахăмăр тĕслĕ, сĕт таса йун тĕслĕ, салат çутă кăвак тĕс курăннă. Çак çутăра хуçи хăй те кĕтмен йапала пулса иртнĕ: хăнисем нимĕн те çиме пултараймăн, иккĕшĕ йăвăр чирлесе ӳкнĕ.

Гиббен хăнасене апата чĕнни етемĕн куракан органĕсем тата вĕсемпе çыхăнса тăракан сисӳ органĕсем тĕрлĕ çутăра тĕрлĕ ĕçленине кăтартакан демонстраци пулса тăнă. Гиббен опычĕ тĕрлĕ çутă чĕрчунсем хăйсене мĕнле тытнине вĕренме кирлине питĕ уççăн кăтартса парать. Çавна тусан етем çутçанталăка хăйне килĕ пек ĕçлеттерĕччĕ. Искусственнăй çутă усăлă ӳсентăрансене часрах ӳстерме, сумкурăкĕсене, бактерисене, сийенлĕ хурт-кăпшанкăсене пĕтерме пултарать; çаксене тума, мĕнле çутă пайăркисем кирлине суйласа илме пĕлни çеç кирлĕ.

(„Техника молодежи").

Çуртăн айалти хучĕсене сӳтни

Нйу-Йоркра пĕр нумай хутлă çурт çĕр айĕнчен чукунçула тума чăрмантарнă. Çавăнпа унăн айалти виçĕ хутне сӳтсе пăрахса, сӳлти хучĕсене тытса тăмали хурçă йупйсене çеç хăварнă.

Сӳлти хучĕсенче пурнăç йаланхи пекех пынă, айалти хучĕсем вырăнĕнче ирĕклĕнсе çĕр айĕнчи чукунçулĕ тунă.

(„Техника молодежи").

900 ĕçкунĕ турĕ

ПАТĂРЙЕЛ. „Восток" колхоз членĕ Данилов Прокопий хăйĕн çемйипе колхозра ĕçлесе 900 ĕçкунĕ турĕ. Кăçал Данилов сахăлтан та 600 пăт тĕштырă илет.

И. Улангин.

Выљав укçисене тӳлеççĕ

Çак уйăхăн йулашки 5 кунĕ хушшинче Çĕмĕрлери перекет касси иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займĕн тăваттăмĕш тиражĕ тăрăх выљаса илекенсене 6.735 тенкĕ тӳленĕ. Вăл шутран хулара 6.130 тенкĕ тӳленĕ.

(Хамăр инфор.).

Хроникă

— Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Соколов Николай Константинович йулташа РСФСР Финанс Халăх Комиссарне çирĕплетнĕ.

— ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Шевелев М. И. йулташа ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Çурçĕр Тинĕс Çулĕн Тĕп Управлени начальникĕн заместителне лартнă.

(ТАСС).

Писателсен пухуве

Нойаберĕн 23-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Чăваш Совет писателĕсен Союзĕн членĕсемпе киндитачĕсен пухуве пулать.

Пухура Чăваш писателĕн Данилов—Чалдун йулташăн творчестви çинчен С. Елкер-й. доклад туса парать. Пухуva çамрăк литератăрсене тата литкружок членĕсене те чĕнеççĕ.

Пуху Пичет çуртĕнче, 3-мĕш хутлăхра, 30-мĕш пӳлĕмре пулать.

Пулни-иртнисем

Трак. Упи йалĕнчи Андрейев Семен кăçал çулла Йевгени йатлă хĕрпе мăшăрланнă.

Йевгени колхозра ĕçлеме йуратнă. Упăшкийĕ Андрейев Семен, Тури Кушар йалĕнчи Архипов кулакпа сыхăнса ĕçке йерсе кайнă, Йевгенине курайми пулнă, вăрçнă, хĕненĕ. Йулашкинчен Архипов кулак хĕтĕртнипе Андрейев хăйĕн арăмне вĕлерме шут тытнă.

Сĕнтябĕр уйăхĕн вĕçĕнче Андрейев Йевгени авăн çапса таврăнасса кĕтсе тăнă. Йевгени килне пырса кĕрсенех Андрейев ăна пуртăпа касма тăнă. Ку инкекрен Йевгени хăтăлнă. Вăл çапах та упăшки çинчен никама та пĕлтерме шутламан. Вăл упăшкипе малала лайăх пурăнасса кĕтнĕ.

Октаберĕн 26-мĕшĕнче Андрейев Йевгенине майĕнчен çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ.

Халĕ Андрейевпа Архипов кулак ĕçне халăх сучĕн аллине панă. Иккĕшне те арĕсленĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР

Чăвашсен Государствă Педагогикă Институчĕ

Чăвашсен Учител Институтне вĕренме кĕме хатĕрленмели курса татах хушса илет

КУРСА

17 çулхисенчен пуçласа 34 çулхисем таран, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене йе вăтам шкулта вуннăмĕш класра вĕреннисене тата педучилищĕра, рабфакра, техникумра йулашки çулхи курсра çур çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

КУРСАНТСЕНЕ

кашни уйăха 64 тенкĕ стипенди тата 20 тенкĕ хватер валљи параççĕ.

Çĕнĕрен илнисене кăçалхи нойаберĕн 20-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Зайавленисене Пединститут директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала: автобиографи, вĕренни çинчен справкă йе аттестат, çурални çинчен справкă, сывлăх пирки справкă, виçĕ фотокартăчкă Зайавленисене кăçалхи нойаберĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—

„Чăваш Коммунĕ"

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ.

ÇЫРĂНСА ИЛĔР!

„Чăваш Коммунĕ" хаçата почтаљйонсем тата почтă агенствисем урлă, почтă уйрăмĕсенче тата Шупашкарти „Союзпичет" урлă

ÇЫРĂНСА ИЛМЕ ПУЛАТЬ.

ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ:

12 уйăха—30 тенкĕ, 3 уйăха 7 т. 50 пус,
6 уйăха—15 тенкĕ, 1 уйăха 2 т. 50 пус.

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне

шут ĕç работникĕсем кирлĕ:

аслă бухгалтер 1
бухгалтерсем 2

Çак адреспа пымала: Шупашкар хули, Заводскайа урамĕ, 6 № çурт

2—1

ДЕТКОМИССИН ÇĔМĔРЛЕРИ КАТКА-ПИЧКЕ ЗАВОДНЕ

çăкаран катка-пичке тăвакан

РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ

УСЛОВИСЕМ: Ĕçукçи — хаљхи расценкă тăрăх. Ĕçе пыма тухнă çул укçи расхутне тӳлеççĕ. Хватерсем пур.

Завод дирекцийĕ.

2—1

Чăваш КОГИЗА

Шофер васкавлă кирлĕ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Адрес: М. Горький урамĕ, 5 № çурт, КОГИЗ.


Шупашкарти Автогужтрест уйрăмне

кирлĕ:

Електромотор 10 к.-ваттлă—1.
Електромоторсем 500 ваттлă—2.

Çак адреспе пĕлтермеле: Шупашкар, Автовокзал, директăра

2—1



„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 865. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.